С(Чув)
К Д18
24671-чув

М. Н. ДАНИЛĂВ-ЧАЛДУН

# ПАРТИЗАНСЕМ



ЧĂВАШИЗДАТ
1935

Национальная библиотека ЧР
4-024671
М 24671 нув

V

М. Н. ДАНИЛӐВ (ЧАЛДУН)

К С(Чув.)
Д 18

# ПАРТИЗАНСЕМ

39655

С № 23415
16 XI 1935 г.

ЧӐВАШИЗДАТ—ЛИТҪЕКТӐР
ШУПАШКАР □ 1935

м 24671-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Редактор Н. Патман.
Технический редактор Н Янгас.
Художник Энгер

ПР...
25 10 ОКТ 2017

Послано в производство 9/VI-35 г.
Подписано к печати 19/VIII-35 г.

Уполномоч. Чувашлита № 1411.
Заказ № 1189.

Чувашгиз № 185. Инд. Х—1
Формат бум. 72×105 1/32.
Об'ем 4 п. л. Тираж 3000 экз.

Типография № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары.

## *ПĔРРЕМĔШ СЫПĂК.*

I

Çĕпĕр. 1918-мĕш çул. Çанталăк кĕркунне йенне сулăннă. Ирĕн-каçăн тăм ӳкнипе, хутран-ситрен йăвăç çулçисем сарăха пуçланă. Уйри тырăсене вырса пĕтернĕ ĕнтĕ. Анчах, çанталăк йалан йĕпе тăнипе, кĕлтисене пуçтарса кĕртеймен, çавăнпа анасем çинче çĕмелсем, майра пуççем, йĕпе чăхсем пуçĕсене чиксе тарăн шухăша путнă пек, хуçисем пырса тийесе кайасса кĕтсе лараççĕ.

Йал пĕтĕмпех каратĕлни отрйад аллине тыткăна лекнĕ: кашни укăлча хапхи умĕнче икшер-виçшер çын дружинниксем*) хурал тăраççĕ, йалтан та кăлармаççĕ, йалала та никама кĕртмеççĕ.

Çиййĕсенче вĕсен акăлчан шинелĕсем, пуçĕсенче француз çĕлĕкĕсем, хулпуççиййĕсем урлă йапун пăшалĕсем çакнă. Айакран пăхсан, ула кураксем пек ула-чăла курăнаççĕ. Сăнĕсем пăхма çук хăрушă. Йалан ерех ĕçнипе пичĕ-куçĕсем шыçăнса тăраççĕ. Сассисем мука пăчăкă пек хăрăлтатса тухаççĕ...

Улткĕтеслĕ, кивĕ ырхан тĕве йĕнерĕ пек чалăшса кайнă тăрăлă чиркӳ хуралçи пӳртĕнче, ирхи куна каçчен, хресченсене пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнсе пырса, йалта кам бољшевик иккенне ыйтса тĕпчеççĕ. Бољшевиксене тупса паман пирки, миçе хресчене саламатпа хĕнесе ӳчĕсене çура-çура кăларса йанă-ши ĕнтĕ?

— Ку халĕ чечекĕсем çеç-ха, çырлисем малала пулĕç,—тет Мăкăњ Хĕветĕрĕ, хресченсене тата хытăрах хăратса.

— Пирĕн йал çеç айăплă мар вĕт кунта,—тесен:

*) *Дружинниксем* -- хăйсен ирĕкĕпе шурă çара çырăннă пуйа çынсем.

— Ытти йалсем те пăрăнса йулаймĕç... Пуриншĕн те пĕр пек кучченеç пулĕ,—тет лĕх-лĕх кулса Мăкăӊ.

Халăх пĕтĕмпех аптăраса çитрĕ ĕнтĕ. Йалан пуху. Йалан пĕр ыйту: «Кам болђшевик, калăр?»

Ак каллех пуху. Пĕтĕм йала—хĕрĕ-хĕрарăмĕ, арçынни-мĕнĕ, ватти-вĕтти—пурне те шкул çуртне хуса пуçтарчĕç. Отрйад начађникĕ Сырăв партă çине улăхса тăчĕ те, аллинчи виçĕ йӳплĕ саламатпа йунаса, урипе тапса, хайаррăн кăшкăрчĕ:

— Йулашки хут пуçтартăм. Йулашки хут ыйтатăп, калăр: кам сирĕн хушăрта болђшевик, кам влаçа хирĕç пыма вĕрентет сире? Каласан хăвăрах çăмăл пулĕ. Каламасан епĕ сире никам çитсе курман çĕре ăсатăп. Ăнлантăр-и?

Шкул чӳречисем тр-тăр-р чĕтресе кайрĕç.

Ăнланмасăр... пурте питĕ лайăх ăнланаççĕ. Анчах пĕри те пĕр сăмах та чĕнмеççĕ. Пурте, çăварĕсене шыв сыпнă пек, Сырăв куçĕсенчен шăтарас пек пăхса, тата мĕнле сăмахсем каласса кĕтсе тăраççĕ. Пурте питĕ лайăх пĕлеççĕ—чĕнсен те, чĕнмесен те ырри пулас çук.

— Мĕншĕн чĕнместĕр? Чĕлхĕрсене хурт çисе йачĕим? Сволăчсем!—пĕтĕм вăйĕпе ахăрать Сырăв. Шкул йанйан йанрать. Шкул тулли халăх, сывлăш кăлармасăр, куçĕсене выђатмасăр, Сырăв çине пăхса тăрать. Хăшĕсем, шкултан тухса тарасшăн пулса, алăк йеннеле çаврăнаçаврăна пăхаççĕ. Анчах тухса тарма май çук, мĕншĕн тесен алăк умĕнче те, чӳрече умĕсенче те дружинниксем, пăшалĕсене хатĕр тытса, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреççĕ.

Алăкран тухма тăрсан, пăшал кучĕпе чышса кĕртеççĕ...

Сырăв ахăрать, шăхличĕ пек çинçе сассине чĕтретсе йанрататать.

Ак хĕвел майĕпен шуса кăнтăрла тĕлне çитрĕ. Сырăв халăха салатмасть, пĕрех болђшевиксем пирки тĕпчет, шырать...

— Калăр, сволăчсем! Кам болђшевик? Унсăрăн çак çуртран кăлармасăрах вĕлерсе пĕтерĕп. Йытăсем!..

Пухури халăх çавах чĕнмест. Çынсем вăрах тата нумайăн сывланипе, шкул пӳлĕмĕ тимĕр кăмака хутнă пек вĕриленсе çитрĕ. Пурте, ăшша пиçнĕ кураксем пек, çă-

варĕсене карса сывлаççĕ, питçăмартийĕсем тăрăх шăпăртатса вĕри тар тумлаť. Пăшăхса çитнĕ çынсем çанă вĕçĕсемпе, кĕпе аркисемпе тарлă пичĕсене шăла-шăла типĕтеççĕ, сăмси шывĕсене шалала нăш-нăш туртаççĕ.

Сырăв, сивĕ тытнă пек чĕтресе ахăрсан-ахăрсан, ыванса çитрĕ пулас. Шăлне шатăртаттарса вăл:

— Каламастăр-им?! Каламастăр-им? Сволăчсем!—терĕ те, партă çинчен сиксе анса, каллĕ-маллĕ уткаласа çÿреме пуçларĕ. Ун вырăнне Мăкăӊ Хĕветĕрĕ улăхса тăчĕ те, пашалу пек хулăн тутисене сарса йарса:

— Йалйышсем! Мĕншĕн-ха епĕр йалта кам болъшевик иккенне калама хăратпăр? Айтăр пĕр-ик çын çине кăтартар та, хамăрах çăмăл пулĕ...

— Кам çине кăтартас пирĕн болъшевик тесе? Айтăр еппин сан çине кăтартар,—терĕ пĕр сасă халăх хушшинчен.

— Çук, çук. Епĕ болъшевик мар. Епĕ вĕсене хирĕç кĕрешетĕп,—тесе, партă çинчен сиксе анчĕ Мăкăӊ Хĕветĕрĕ.

— Ха-ха-ха!..—ахăлтатса кулса йачĕ халăх.

— Мĕн кулатăр?! Чăн-чăн болъшевиксене кăтартса парăр мана, сволăчсем, чорт воçми!—ахăраť Сырăв, урипе качака таки пек шартлаттарса...

Халăх каллех шăп пулчĕ.

— Мĕнле болъшевиксем кирлĕ сире. Пирĕн йалта ун пек кун пек çынсем çук. Епĕр пурсăмăр та хресченсем, çĕр ĕçлесе тăранса пурăнатпăр. Болъшевиксем вĕсем хуласенче, хапрăк-савăтсенче, шахтăсенче, приискăсенче,—çавăнта кайса шырăр,—терĕ тепĕр сасă.

— Суйатăн, йалсенче те туллийех вăл шуйттан болъшевиксем... Болъшевиксемсĕр пуçне мĕнле-ха есĕр востани тума пултартăр? Кам вĕрентрĕ сире халăх кĕлетĕнчи тырра, влаç хушмасăр, салатса илме?—ахăрчĕ Сырăв нимĕн тăвайманнипе. Тарăхнă йенне унăн çамки çинчи тирĕ пĕркеленсе илчĕ.

Акă, фронтран чирлесе пĕр уйăхлăха канма килнĕ Мирун маларах тухса тăчĕ те:

— Мĕнле болъшевиксем шыратăр есĕр пирĕн хушăра? Епĕр пурсăмăр та болъшевиксем. Халăх кĕлетĕнчи

тырра салатса илме никам та вĕрентмен пире. Хамăр салатрăмăр та, хамăр илтĕмĕр,—терĕ.

— Камсем есĕр—пурсăрта... йалĕпе?.. Сволăчсем!.. Çмирнă-а-а-а! Вуннăран тăххăрăшне кăларса йарăр, пĕрне тытса йулăр,—терĕ Сырăв шăл витĕр, алăк умĕнче халăха кăлармасăр сыхласа тăракан дружинниксем çине пăхса. Унтан çиллипе акăлчан тăлинчен çĕленĕ гимнаçторки кĕсйинчен çигар кăларса çăварне хыпрĕ те, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳресе, тахçан туртман пек питçăмартийĕсене шалала туртса, пĕчĕк ача чĕчĕ ĕмнĕ пек васкаса, ĕме пуçларĕ.

Пухури çынсем вĕлле хурчĕсем пек сĕрлеме пуçларĕç...

— Чĕлхӳне чар, Мирун, тем кăтартса хăварĕ хамăра... Турă хăйех сыхлатăр...—пăшăл-пăшăл калаçса илчĕç çынсем. Хăшпĕрисен, хăранипе, хăйăр йуха пуçларĕ курнаť.

Мăкăњ Хĕветĕрĕ дружинниксем çине пăхса, хăрах куçне кăшт хĕсрĕ. Ку ĕнтĕ мĕншĕнни паллă: Мирун—бољшевик, ăна шкултан ан кăларăр, тытса йулăр,—тенине пĕлтерчĕ.

Дружинниксем çавăнтах, Сырăв каланине итлесе, вăл хушнине тума пуçларĕç. Чи малтан Мируна тытса йулчĕç. Унтан ыттисене вуншарăн-вуншарăн суса, тăххăрăшне кăларса йараççĕ, пĕрне тытса йулаççĕ. Дружинниксем Сырăв хушнине тумасăр ăçта кайччăр... вăл вĕт вĕсен начаљникĕ, хулари первăй гилди купца ывăлĕ—офицер. Сырăвăн, дружинниксен тата Мăкăњ Хĕветĕрĕн пурин те пĕр шухăш: мĕнле те пулсан бољшевиксене çĕнтерсе, хăйсен ĕмĕр-ĕмĕр çын вăйĕпе пухнă мулĕсене сыхлас шухăш. Бољшевиксен хăйсен урăх шухăш: вĕсем пуйансен мулĕсене туртса илсе, ĕçхалăх патшалăхĕн аллине памала, ĕççыннисен влаçĕ тумала, çавăнпа та хаљхи вăхăтра икĕ вăй кĕрешеççĕ. Пĕр йенче пуйансем тата вĕсен лакейĕсем; тепĕр йенче бољшевиксем йертсе пыракан рабочисем, чухăн тата вăтам хресченсем тăраççĕ. Çак икĕ вăй пĕрне-пĕри пурнăç мар вилĕм сĕнеççĕ. Сырăвсем бољшевиксене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтересшĕн те, анчах пĕрне вĕлерсен ун вырăнне

çĕр бољшевик тапса тухаť. Кашни кун çĕнĕрен-çĕнĕ вăйй хутшăнса пыраť, ўсет.

Шкулри çынсем, мĕнле те пулин вуннăмĕшне лекесшĕн мар пулса, пĕрне-пĕри алăк патнеле хĕсеççĕ. Такана çинчи пек чўхенеççĕ.

Пурте питĕ лайăх пĕлеççĕ вуннăмĕшне лексен мĕн пуласса. Вăл ĕçе ĕнтĕ Сырăв Усман йалĕнче туса иртернĕ.

— Хуллентерех!

— Ан хĕсĕр.

— Ан васкăр!

— Ёлкĕрĕр!—кăшкăраççĕ алăк умĕнче дружинниксем.

Алăкран тухнисем, хыçала çавăрăнса пăхмасăр, такăна-такăна ўксе килĕсене васкаççĕ.

Ак, шкултан кăларса пĕтерчĕç. Тăхăр çынна тытса йулчĕç.

— Ну, калăр ĕнтĕ, кам сирĕн хушăрта бољшевик?— ыйтрĕ татах Сырăв, хресченсем умне пырса.

Хресченсем, хирĕç ним чĕнмесĕр, пуçĕсене лашт чикрĕç, çăварĕсем типнипе чĕлхисене йăваласа, сурчăкĕсене çăтаççĕ.

— Каллех каласшăн мар-и-ха есĕр? Сволăчсем! Ак кăна куратăр-и?—Сырăв, аллинчи саламата çўле çĕклерĕ.

Мирун каллех тўсеймерĕ, хирĕç чĕнчĕ:

— Пирĕн хушăра есĕ уйрăм бољшевик тупайас çук, мĕншĕн тесен пирĕн пурсăмăрăн та пĕр шухăш...

— Суйатăн, тупатăп! Ак хăвах каласа парăн кам бољшевик иккенне, хе-хе-хе...—йусман пек çўхе тутисене сарса йарса, лĕх-лĕх кулса илчĕ Сырăв.

— Тупаймăн!—

— Тупатăп!

— Çук, тупаймăн!

— Тупăп!

Чылайччен Мирунпа Сырăв тавлашса тăчĕç. Йулашкинчен Сырăв çиленсе çитрĕ:

— Пуçлăр-ха çак геройран, каласа патăр вăл йалта кам бољшевик иккенне,—терĕ дружинниксем çине пăхса.

Дружинниксем, çавăнтах Мируна çавăрса тытса, çийĕнчи кĕпине пуçĕ çинеле тавăрчĕç. Йĕмне антарса, хăйне партă çине чăсса ӳпне вырттарчĕç. Пĕр дружинникĕ—Мирунăн урисем çине, тепри—мăйĕ çине улăхса ларчĕ.

— Малтанлăха çирĕмпиллĕк... Сахалтарах пулсан, кайран тата хушăпăр,—терĕ Сырăв шăлĕ витĕр.

— Рат старатсă, вашăроди!—сиксе тăчĕ пĕр хĕрлĕ сухаллă, такана хырăмлă, çерçи çăмарти пек чăпар питлĕ дружинник. Унтан гимнаçторкин çаннине тавăрса, тăхлан вĕçлĕ саламатне майĕпен çӳлеле çĕклесе, сасартăк Мирунăн çара ӳчĕ тăрăх туртса касрĕ. Мирунăн шурă ăвăс пек ӳчĕ хăрăм пек хуралса кайрĕ. Вунпилĕк çапиччен Мирун пĕр хускалмасăр выртрĕ. Хĕрлĕ сухал: Вунулттă! тесе çапсассăн, Мирун вăкăр пек мĕкĕрсе, кăткă йăви çине пăрахнă çĕлен пек йавкаланса илчĕ те:—У-ух! прокљатăйсем!—кăшкăрса йачĕ. Унтан каллех лăпланса выртрĕ.

— Сволăч! Кала—кам бољшевик?—хăвăрт утса пырса, Мирунăн çăварĕнчен шĕвĕр пуçлă аттипе шартлаттарса тапрĕ Сырăв.

Мирун хăйĕн пуçĕ çинче ларакан дружиннике айккинеле сирпĕтсе йачĕ, унтан ним чĕнмесĕр, пуçне çĕклесе, Сырăв куçĕнчен шăтарас пек пăхса, шăлĕсене шăтăр-р-р шатăртаттарчĕ те, аллипе çăварне тытса, каллех пуçне чиксе выртрĕ. Çавăнтах партă айне хĕп хĕрлĕ йун шăпăртатса йухса анчĕ.

Хĕрлĕ сухал саламата çирĕм улттăмĕш хут çӳлеле çĕклерĕ. Анчах Сырăв ăна чарчĕ.

— Çитĕ!. .Молодцы!..

— Рат старатсă, вашăроди,—хĕрлĕ сухал, йунлă пӳрнисене тăнлавĕ çумне хурса чеç пачĕ.

Мирун партă çинче вилнĕ пек пĕр хускалмасăр выртать. Чĕри унăн авăн çапнă пек тӳпĕлтетсе тапать. Купарчи çинчи çапнă тĕлĕсенчен, хурăн шывĕ пек пăчăртатса, йун сăрăхса тухать, вăл пăрçа пĕрчи пек чăмăртанса урайне тумлать. Мирун умĕнче тата саккăрăн пуçĕсене чиксе тăраççĕ. Пурте вĕсем Мирун пекех çак калама çук йăвăр тӳсĕме кĕтеççĕ.

— Йури вилнĕ пек пулса выртаť сволăч! Нук-ка, купарчи çине пĕрер ывăç тăвар сапса йăваласа йар,— терĕ Сырăв, хĕрлĕ сухал çине пăхса.

— Рат старатсă, вашăроди!—хĕрлĕ сухал, чĕрни çине тăрса. Çавăнтах пĕр ывăç тăвар илсе, Мирунăн суранлă купарчи çине сапрĕ те, икĕ аллипе пусса йăвала пуçларĕ.

— Кăна илсе пăрахăр та ыттисене черетлĕр,—терĕ Сырăв, уткаласа çўреме тытăнса.

Дружинниксем çавăнтах Мируна айккинеле илсе пăрахрĕç. Мирун вырăнне Микулана чăсса выртарчĕç. Хайхи хĕрлĕ сухал каллех:—Пĕр-ре... ик-кĕ... пиллĕк...: вуннă... вунпил-лĕк, çирĕм... çирĕмпил-лĕк!—чăстарса сăва пуçларĕ... Аллинчи саламат, çĕлен пек йавкаланса, пĕрре çўлеле çĕкленет, тепре хăвăрт айалала анса çемçе ўт çумне сăвăс пек çите-çите çыпăçаť. Микула Мирун пек чăтăмлă мар, çапмассерен хайаррăн кăшкăра-кăшкăра йараť...

Хĕвел каçала сулăнчĕ. Хресченсене тăххăрăшне те, çирĕмпилĕкшер çапса, суранлă ўчĕсене тăварпа йăвала-йăвала йачĕç. Сарă сăрпа сăрланă шкул урайĕ хĕрлĕ йунпа пĕвенчĕ. Анчах Сырăв пĕринчен те бољшевик йатне илтмерĕ.

Чăнах та кунта пурте бољшевиксем, тесе шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнче. Унтан пăртак шухăша кайса тăчĕ те сасартăк:

— «Ну, сволăчсем! Халех пурне те масар çине хуса йарăр. Кăтартăп епĕ вĕсене ирĕклĕх... парам çĕр... çитерем çăкăр,—терĕ.

— Так точнă! Рат старатсă, вашăроди!—сике-сике тăчĕç дружинниксем.

Хĕвел йун тăкăннине курас мар терĕ пулас, çавăнпа куллен-кун анакан вырăнне васкаса шуса, курăнми пулчĕ. Шкул чўречисем витĕр каçхи тĕттĕм сăнĕ çапрĕ.

— Марш! Пурте ман хыçран,—кăшкăрчĕ хĕрлĕ сухал. Хăй васкаса, шкул алăкне йар-р уçса, тулала тухрĕ.

Хресченсем пĕр-пĕрин куçĕнчен шăтарас пек пăха-пăха илчĕç те пурте умлăн-хыçлăн хĕрлĕ сухал хыççăн майĕпен тулала утса тухрĕç.

Шкул лашт пушанса йулчĕ. Вĕри сывлăшпа тарланă чӳречисем кӳлĕ пек сарăлса выртакан йун çине тĕлĕнсе пăхса ларчĕç. Мачча çумĕнче çыпăçса ларакан кĕрхи симĕс пуçлă хура шăнасем йун шăршине сиссе, урайне вĕçсе анса, сĕрлеме пуçларĕç.

Хресченсене тăххăрăшне те дружинниксем çавăрса илнĕ; вĕсем пăшалĕсене хатĕр тытса, урам тăрăх масар йеннеле утаççĕ. Малтан та, хыçалтан та, айаккисенчен те хресченсене тăванĕсем, ашшĕсем-амăшĕсем, пиччĕшĕсем, арăмĕсем, ачисем, савнă хĕрĕсем сассăр, татăлса йĕрсе ăсатаççĕ.

— Ех, самана! Мĕнле вăхăтсем çитрĕç... Чĕрĕлех масар çине пытарма илсе кайаççĕ,—терĕ пурте илтмеле Мĕкĕте мучи, шывланнă куçĕсене улача кĕпе çанни вĕçĕпе шăлса типĕтсе.

— Ей, сывăха ан килĕр,—кăшкăраççĕ дружинниксем.

Ак, шĕвĕр çамкалă, çӳхе сăмсалă дружинник, Мĕкĕте мучи патне чупса пырса, шурă куçĕсемпе пăхрĕ:

— Есĕ мĕншĕн влаçа хирĕç калаçса пыратăн, ватă çерçи? Акă сана,—ӳлĕмрен болъшевиксем майлă пулмăн,—пĕтĕм вăйĕпе ахлатса пăшал кучĕпе Мĕкĕте мучин пуçĕнчен чышрĕ. Мĕкĕте, утса пынă çĕртех тăп чарăнса, пуç çаврăнан сурăх пек, чылайччен пĕр вырăнта çаврăнса тăчĕ. Унтан хыттăн кăшкăрса йарса, месерле çаврăнса ӳкрĕ. Кăлкан пек шурă çӳçĕсем витĕр хĕрлĕ йун йухса анчĕ; куçĕсем тин туха пуçланă çăлтăрсем çинеле тинкерсе пăхрĕç; аллисемпе нӳрлĕ тăпрана чăмăртаса тытса, шăлĕсене шарт çыртса, выртса йулчĕ вăл.

Ак масар карти ăшне кĕрсе кайрĕç.

— Стой... Çмирнă!—кăшкăрчĕ Сырăв. Сасси улăх тăрăх о-о-о! туса саланчĕ. Дружинниксем чарăнчĕç. Хресченсем те чарăнса, пуçĕсене çĕкле-çĕкле пăхрĕç: умĕсенче хĕрессем чаркаланса ларнине курсан, тарăнăн сывласа, каллех пуçĕсене лашт чикрĕç.

— Вунă утăм хыçалала чакăр!—камандă пачĕ Сырăв.—Пĕрре, иккĕ, виççĕ... вуннă...

Дружинниксем чакса тăчĕç.

— Хатĕрленĕр,—терĕ Сырăв, хĕçне йĕннинчен туртса кăларса.

Дружинниксем пăшал затворĕсене шăлтăр-шалтăр уçа-уça хупрĕç.

— Есĕр çĕршĕн çапăçатăр пирĕнпе. Ак сире ваљљи çĕр, мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ паратăп,—терĕ Сырăв, пӳрнипе çĕреле тĕллесе.—Ирĕклĕх шыратăр,—ăна пĕлĕт çинче тупăр. Çмирнă-а-а!

Дружинниксем пăшалĕсене хулпуççийĕсем çумне тĕресе хучĕç.

Хресченсем пĕрне-пĕри ытала-ытала илсе чуптурĕç те каллех пуçĕсене чиксе тăчĕç. Чĕрисем чул пек хытса ситрĕç—йĕме куççулсем тухмаççĕ, типсе ларнă. Пĕр Мирун анчах пуçне усмасť, вилĕм умĕнче тăраť пулсан та, вăл хăйĕн хастарлăхне пăрахмасť. Мирун шанаť,—вăл вилнипе револ̧уци пĕтес çук. Питĕ лайăх пĕлет рабочисемпе хресченсем буржуйсене çĕнтерессе, çавăнпа та вилĕмрен хăрамасť. Сылтăм аллине çӳлеле çĕклесе, пĕр çĕнĕ хĕрес çине сиксе улăхса тăчĕ те, масар йĕри-тавра купаланса тăракан çынсем çине пăхрĕ.

— Йулташсем! Ан хăрăр есĕр, пирĕншĕн йĕрсе куççул ан тăкăр. Вĕлерсе, пĕтеретпĕр теççĕ пулĕ те вĕсем пире. Çук! Епĕр вилсен те, пирĕн вырăна урăххисем пулĕç, вĕсем пиртен хастарлăрах çапăçĕç. Пире масар тытса чараймĕ, епĕр унтан та тухса çапăçăпăр. Епĕр вăйлă! Епĕр нумайăн...—Мирунăн сасси каçхи сулхăн айĕнчен таçта çитиччен йантраса тăчĕ. Масар йĕри-тавра, тĕрлĕ сасăсемпе татăлса йĕрекен çынсем шăп пулса итлесе тăчĕç. «Чăнах та масар шăтăкĕнчен тухса тарĕçш-им»...—тесе шухăшларĕç хăшĕ-пĕрисем.

Мирун тата тем каласшăн çăварне уçнăччĕ. Анчах сасартăк:

— Отрйад, пли!—кăшкăрчĕ Сырăв. Çавăнтах пăшал сассисем йĕркесĕр кĕрлесе кайрĕç. Мирун тата унпа йунашар тăракан Микул пуринчен малтан чикĕне-чикĕне анчĕç. Унтан ыттисем, хăшĕ месерле, хăшĕ ӳпне, хăшĕ хăйаккăн йăвана-йăвана ӳксе, пĕтрĕç. Пăшал сассисем улăх тăрăх ахăлтатса кулса, çĕнĕрен ухлатса çухалчĕç. Çимун чĕркуççийĕ çине хутланса анчĕ те, чылайччен

йӑванса кайаймасӑр, сулкаланса ларчӗ. Хӗрлӗ сухаллӑ дружинник, хӗҫне туртса кӑларса, пӗтӗм вӑйӗпе ахлатса ҫапрӗ. Симунӑн вӑрӑм ҫӳҫлӗ, качака сухаллӑ пуҫӗ иквиҫ хӑлаҫа сирпӗнсе кайрӗ, пӗвӗ месерле тӗшӗрӗлсе анчӗ; унтан хӗрлӗ сухал йунланнӑ хӗҫне курӑк ҫумне шӑлса тасатрӗ те каллех йӗнни ӑшне чиксе хучӗ.

Масар тулашӗнче ӗнӗрмен купӑссем пек тӗрлӗ сасӑсемпе йӗни йанраса тӑчӗ.

— Кил-ха кунта!—чӗнсе илчӗ Сырӑв Мӑкӑҥ Хӗветӗрне хӑй патне.—Ыран шӑтӑк алттарса, пурне те пӗр шӑтӑка пытарттар. Тӑванӗсене илсе таврӑнма ан пар. Лайӑх сыхла. Илтрӗн-и?

— Так точнӑ, илтрӗм, вашӑроди!—тесе сылтӑм аллин кӗпшек пӳрнисене кӑвак тӑла картусӗн сӑмси ҫумне тӗресе чеҫ пачӗ Мӑкӑҥ Хӗветӗрӗ. Мӑкӑҥ Хӗветӗрӗ, салтака кайса ҫӳремен пулсан та, начаљниксене чеҫ пама пултарать. Пуйан ҫын ывӑлӗ ҫав, хулара гимназире вӗреннӗ чухнех начаљниксене чеҫ пама вӗреннӗ. Германи вӑрҫине илмерӗҫ ӑна, чирлӗ терӗҫ. Вӑл вӑрҫӑ пуҫланиччен те пуйанччӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пушшех пуйса ҫитрӗ. Хаљ граждӑн вӑрҫи пуҫлансан та салтака илмеҫҫӗ. Йалта ҫеҫ камандӑвать тӑвать. Хаклӑ йышши ерехсем, пыллӑ сӑрасем Мӑкӑҥ Хӗветӗрӗ умӗнче. Пупсем хура халӑха «рай» пӗлӗт ҫинче тесе суйаҫҫӗ. Анчах Мӑкӑҥ Хӗветӗрӗн «рай» ҫӗр ҫинчех. Тата хӑҫанччен тарӑхтарса пурӑнӗ-ши ку тӑшман хура халӑха?..

— Кругом... марш!—камандӑ пачӗ Сырӑв.

Дружинниксем, атӑ кӗллисем ҫинче ҫаврӑнса, пӑшалӗсене хулпуҫҫийӗсем ҫине хучӗҫ те, харӑс пусса, масар карти ӑшӗнчен тухрӗҫ.

Дружинниксем курӑнми пулсан, масар карти тавра тӑракан халӑхсем пурте масар ӑшнеле кӗпӗрленсе кӗрсе кайрӗҫ. Мирун арӑмӗ, Марйе, упӑшки патне чупса ҫитсе ун ҫине чӑсӑлса ӳкрӗ, тин мӑйӑх тухса сӑрнӑ тутисенчен чуптуса, чыхӑна-чыхӑна кайса йӗре пуҫларӗ.

— Ах, Мирун чунӑм, есӗ ҫук-им ӗнтӗ ку ҫут тӗнчере?

Пӗр вӑхӑта масар ҫинче йӗнинчен пуҫне урӑх сасӑ илтӗнмерӗ. Пурте хӑйсен тӑванӗсем, ашшӑсем, пиччӗшсем, савнӑ упӑшкисем, каччисем ҫумне выртa - вырта,

ытала-ытала, чуптăва-чуптăва татăлса, тĕрлĕ сасăсемпе йĕчĕç. Шанк месерле выртакан Мирун сылтăм аллине майĕпен çĕклесе арăмĕн хулпуççийĕнчен тытрĕ. Татăлса йĕрекен Марйе, сасартăк йĕме чарăнса, пĕрре хăранипе, пĕрре савăннипе йалтлатса сиксе тăчĕ.

— Ай, Мирун, чунăм! Есĕ чĕрĕ-им?—хайаррăн кăшкăрса йачĕ.

Мирун, арăмне аллинчен йарса тытса, хăй çинеле туртса илчĕ.

— Ан хăра, Марйе, епĕ чĕрĕ. Ман сулахай алă çеç суранланнă. Мĕнпе те пулсан туртса çых, унсăрăн йун питĕ кайаť. Анчах сыхлан, никама та ан пĕлтер епĕ чĕрĕ йулнине,—терĕ хуллен.

Марйе, упăшки чĕрĕ йулнипе савăнни ним тума пĕлмесĕр, Миruна темиçе хут ытала-ытала илсе чуптурĕ те пусĕнчи çицă тутрине салтса илсе, Мирунăн суранланнă аллине туртса çыхрĕ.

— Мăкăŋ Хĕветĕрĕ кайнă-и?—ыйтрĕ хуллен Мирун.

Марйе çаврăнкаласа пăхрĕ.

— Кайнă, курăнмасť.

Мирун майĕпен çĕкленсе ларчĕ.

— Тата хăшĕ те пулин чĕрĕ йулнă-ши?

Татăлса йĕрекен сасăсем пĕр вăхăта шăп пулчĕç. Пурте куçĕсене Мирун çинеле тĕллерĕç.

Çук, урăх нихăшĕ те хускалмаççĕ. Саккăрăшĕ те, йеплe ӳкнĕ, çаплипех чăсăла-чăсăла выртаççĕ.

Йалта йытăсем йăнăша-йăнăша вĕреççĕ. Унта дружинниксем килĕрен киле выçă кашкăрсем пек мĕн те пулин тутлăрах йапала тупса çийесшĕн шыраса çӳреççĕ...

Мирун, ури çине тăрса, унăн-кунăн çаврăнкаласа пăхрĕ:

— Йулташсем! Куратăр-и, мана тăшман пуљљи персе вĕлереймерĕ. Анчах епĕ чĕрĕ йулнипе çак масар çинчи сынсенчен пусне урăх никам та ан пĕлтĕр.—Сырăвпа Мăкăŋ Хĕветĕрĕ пĕлес пулсан сире, йалти çынсене, тата та йăвăр пулма пултарĕ. Ирхине, йулташсене пытарнă чух,—«Тăххăрăмĕшĕ ăçта» тесе ыйтсан, «çĕрле кашкăрсем çисе кайнă» тейĕр. Малашне мана кунта пурăнма йурамасť, епĕ кайатăп... Вилнĕ йулташсемшĕн йĕрсе куç çуљ ан тăкăр. Револљуци унсăр пулмасť. Халлĕхе сывă

пулăр. Вăрах çӳремĕп, килсе çаврăнса кайăп-ха епĕ. Ун чух вара епĕр те пĕлĕпĕр вăл дружинниксемпе мĕн тăвасса.

Мирун арăмне ыталаса илсе чуптурĕ те, халăх йенне пуçне тайса масар карти урлă хăвăрт каçса кайрĕ. Масар çинчи çынсем, пĕр вăхăта тĕлĕнсе, пăхса йулчĕç. Марйе упăшкин хура мĕлки курăнми пуличченех ăсатса пăхса тăчĕ...

Тулли уйăх çӳлĕ ту хыçĕнчен хĕрлĕ чĕлхине чăсса кăларсан, тĕттĕм çĕр кăшт çутăлчĕ. Марйе лапăстатнă сарă çӳçне тирпейлесе çитлерĕ те масар хапхинчен тухса килнеле утрĕ. «Тĕлĕк пулчĕ-ши ку, чăнах пулчĕ-,ши?— шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнче.—Çук, тĕлĕк мар, чăнах...

Масар çинче çĕрĕпе татăлса йĕнĕ сасăсем лăпланмарĕç. Йалта йытăсем те çĕрĕпех вĕрчĕç.

II.

Халăх макăрнине кура, пĕлĕт те тӳссе тăраймарĕ, майĕпен куççуљне шăпăртаттара пуçларĕ. Уйăх, пĕлĕт айне кĕрсе, курăнми пулчĕ. Çĕр каллех тĕттĕмленчĕ. Мирун хыçалала çаврăнса пăхса, çулсăр-мĕнсĕр такăна-такăна утаť. Ăçта кайаť вăл? Тĕттĕм çĕр ăшĕнче хăй те чухласа илеймест. Анчах мĕнле те пулсан йалтан айаккала уйăрăласшăн тăрăшаť. Ĕнер саламатпа çапнă вырăнсем, тата пуљăпа суранланнă алли йĕппе чикнĕ пек ыратаççĕ. Мирун шыв кураймăп-ши тесе, тĕрлĕ йеннеле пăхкалаť. Çук. Пур йенче те çӳлĕ тусем, хура вăрман, çеçенхир сарăлса выртаť. Çăвар ăшĕ типсе çитнипе вăхăт-вăхăт куçĕ хуралса килнипе вăл йăванса кайса выртаť. Анчах çавăнтах дружинниксен аллинчен хăтăлни асне çитсе кĕрет те, вăл йалт сиксе тăрса, каллех малала утаť.

Сасартăк пĕлĕт ик йенеле уйрăлса тулли уйăх талкăшĕпех курăнчĕ. Тĕттĕм çĕр çап-çутă çутăлса çитрĕ. Инçе те мар пĕр тарăн вар курăнчĕ.—Ку варта йепле те пулсан шыв пур ĕнтĕ, анатăп та ĕçетĕп,—шухăшларĕ Мирун. Çавăнтах урисене çĕре лектермесĕр васкаса чупрĕ. Акă вăл вар тĕпнеле ана пуçларĕ, кураť: инçе те мар çерем кассипе витнĕ пĕр хӳшĕ курăнаť.—Шыв ĕçетĕп те, çак

хӳшше кӗрсе выртса канатӑп ӗнтӗ»,—тесе шухӑшларӗ вӑл, тӳрех хӳшӗ патнелле васкаса утрӗ.

Хӳшӗпе йунашар пысӑк мар ҫырма шывӗ вӗтӗ чул ҫинчен шӑнкӑртатса йухать. Мирун, шыва курсан, тӳсеймерӗ—тӑватураланса, лаша пек лӑнкӑрт-лӑнкӑрт ӗҫме пикенчӗ.

Тӑраниччен ӗҫнӗ хыҫҫӑн вӑл хӳшӗ патнелле утрӗ.

Хӳшӗ патне ҫитсен, Мирун кӑшт чарӑнса итлерӗ. Ниҫта та сас-чӗв ҫук. Мирун хӳшӗ алӑкне уҫса йачӗ те хӳшӗ ӑшне уйӑх ҫути ӳксен, унта икӗ ҫамрӑк ларнине курчӗ.

— Камсем есӗр?!—хайаррӑн кӑшкӑрса ыйтрӗ Мирун вӗсенчен.

— Епӗр ухутаҫӑсем,—чӗнчӗ вӗсенчен пӗри хӑранӑ сасӑпа.

— Пӑшалӑрсем ӑҫта?.. Парӑр кунтала! Унсӑрӑн епӗ сире халех персе пӑрахатӑп,—сылтӑм аллипе кӗсйинчен темӗскер туртса кӑларнӑ пек турӗ Мирун.

— П-пӑ-пӑшалсем ҫук пирӗн,—терӗ тепри тутисене чӗтретсе.

— Пӑшалсӑр мӗнле ухутаҫӑсем пулатӑр есӗр?—хӳшӗ ӑшнелле кӗчӗ Мирун. Лешсем ним чӗнмесӗр, сивӗ тытнӑ пек чӗтресе ларчӗҫ. «Кусем те ман пек таркӑнсем пулас»—шухӑшларӗ Мирун. Унтан йӑвашшӑн сӑмах чӗнчӗ.

— Таркӑнсем-и есӗр?

— В-в-вара,—шӑппӑн каларӗҫ каччӑсем.

— Ан хӑрӑр. Епӗ хам та сирӗн пекех таркӑн,—терӗ Мирун, тутисене култарса.

— Чӑнах-и? Епӗр сана дружинник тесе.—Каччӑсем иккӗш те урисем ҫине сиксе тӑчӗҫ.

Унтан Мирун вӗсем камсем иккенне ыйтса пӗлчӗ: вӗсенчен пӗри Хутар йалӗнчен, Ентри йатлӑ мӑкшӑ, тепри Усман йалӗнчен, Ахмет йатлӑ тутар. Йулашкинчен Мирун хӑй кам, хӑш йалтан иккенне, мӗнле майпа дружинниксен аллинчен хӑтӑлнине йӗркипе каласа пачӗ. Ентрипе Ахмет хӑлхисене тӑратсах итлесе ларчӗҫ.

— Епӗр салтака тытса кайнӑ ҫӗртен тартӑмӑр,—пӗлтерчӗҫ вӗсем Мируна. Ахметпа Ентри, Мирунӑн суранлӑ аллине салтса, ҫӗнӗрен тирпейлесе ҫыхрӗҫ.

Тата кăшт каласса ларнă хыççăн, Мирун ларнă çĕртех çывăрса кайрĕ. Ентрипе Ахмет та, чĕрĕпсем пек хутлана-хутлана, çывăрма выртрĕç.

Уйăх çути шурăмпуç шуралса киличченех хӳшĕ çине çутатса тăчĕ. Мирун çывăрат̆ пулсан та, çырма шывĕ шанкăртатса йухса иртни унăн хăлхисенчен каймарĕ.

Ирхине Мирун, пуринчен малтан вăранса, хӳшĕрен тухрĕ те хĕвел тухăçнеле пăхрĕ—Тупăксăр... Ӳчĕсене çумасăр саккăрăшне те пĕр шăтăка. Ех! Мирун, шăлĕсене шатăртаттарса, тарăн шухăша путса, чылайччен тăчĕ. Унтан, чĕри çинче йăвăррăн пусса выртакан шухăшне сирсе йарасшăн пулса:

— Ей, йулташсем! Тухса пăхăр-ха, епĕр кунта крепăçри пекех ларатпăр вĕт, никам та шыраса тупайас çук пире!—тесе кăшкăрчĕ.

Ахмет, хӳшĕ алăкĕнчен пуçне кăларса, йĕри тавра пăхкаларĕ.

— Чăнах та! Йĕри-тавра ту, вăрман. Ку хӳшĕ ухатаçăсен пулас. Кунта çурла-кĕрле çеç çын чунĕ пулат̆ пуљ. Пĕр хăрамасăр пурăнма пултаратпăр ĕнтĕ епĕр кунта. Хĕрлисем çĕнтерсе çитсен вара, килсене таврăнăпăр.

— Крепăç пек пулсан та епĕр кунта пурăнма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен ку вырăнтан инçе мар йал пур, вăл йалта пуйансем пурте дружиннике çырăннă, вĕсем, пайан пулмасаң, ыран кунта килсе тухма пултараççĕ. Тепĕр йенчен, епĕр кунта выçă пурăнма пултараймастпăр. Пирĕн мĕнле те пулин пĕр-пĕр йала кайса, хушаматсене улăштарса, йе тара, йе кунăн ĕçлесе тăранса пурăнма вырăн шырас пулат̆,—терĕ Ентри, хӳшĕрен тухса.

— Апла вара, йала мар, пĕр-пĕр хулана кайас пулат̆, мĕншĕн тесен йалта епĕр камсем иккенне пĕлме пултараççĕ. Хулара мĕн? Унта пире никам та пĕлес çук. Самана лăпланиччен пĕр-пĕр хапрăка, йе савăта кĕрсе ĕçлесе пурăнăпăр,—терĕ Ахмет.

— Çук, йулташсем! Пире йалта та, хулара та пурăнма май çук, мĕншĕн тесен, пирĕн епĕр камсем иккĕнне пĕлтерекен хутсем çук—ку пĕр йенчен, тепĕр

йенчен тата куратӑр вӗт есӗр—йалсенче, хуласенче пуйансем пурте тенӗ пекех дружиннике ҫыrӑнаҫҫӗ. Вӗсем пире, пайан пулмасан, ыран, ыран мар тӑк, тепӗр кунне тытса илме пултараҫҫӗ. Самана лӑпланса, хӗрлисем килессе кӗтсе тӑрас пулмасӑ пирӗн. Пӑтранма пуҫланӑ саманана тата хытӑрах пӑтрантарас пулаӑ. Вара хӗрлисем тата часрах килсе ҫитме пултараҫҫӗ. Тӳррипе каласан, пирӗн хӗрлисене пулӑшас пулаӑ,—терӗ Мирун.

— Мӗнпе пулӑшма пултаратпӑр-ха епӗр кунтан хӗрлисене?

— Мӗнпе? Тайга вӑрманӗнче партизан отрйачӗ пур. Пирӗн ҫав отрйада ҫитсе хутшӑнса, шуррисене хирӗҫ ҫапӑҫас пулаӑ. Ҫавӑ пулаӑ хӗрлисене пулӑшни. Хӗрлисем малтан, епӗр хыҫалтан хирме пуҫласассӑн, шуррисене ҫӗнтерсе, тин самана лӑпланма пултараӑ. Тата епӗр хамӑршӑн та ҫав отрйадра ҫеҫ канлӗх тупма пултаратпӑр. Капла епӗр мӗн чул пурӑнсан та, хӑҫан та пулсан пире тытса илме пултараҫҫӗ.

Ахметпе Ентри Мирун сӑмахӗсемпе пӗтӗмӗшпех килӗшрӗҫ. Тайга вӑрманне кайса партизан отрйадне шыраса тупма сӑмах татрӗҫ.

Виҫӗ таркӑн—чӑваш, тутар, мӑкшӑ—шӑнкӑртатса вырттакан шыв хӗррине анса пичӗсене ҫуса, вырта-вырта шыв ӗҫрӗҫ те утма ҫулпа, вар тӑрӑх шыв йухӑмне май, тайга вӑрманӗ йеннеле утрӗҫ.

## III.

Ирхине хӗвел курӑнмарӗ, ӑна касӑ-касӑ хура ҫӑмӑр пӗлӗчӗсем хупласа тӑчӗҫ.

Хресченсем, пиллӗкӗн, хулпуҫҫийӗсем ҫине тимӗр кӗреҫесем хурса, масар ҫине пычӗҫ. Вӗсем хыҫӗнчен Мӑкӑҥ Хӗветӗрӗ те йал вӑкӑрӗ пек мӑшӑлтатса ҫитрӗ. Хӑйӗнчен тӳсмеле мар кӑрчама шӑрши ҫапаӑ.

— Ак ҫак вырӑна алтӑр,—терӗ вӑл, кӗпшек пӳрнипе кӑтартса.

Хресченсем, ҫӗлӗкӗсене хывса, хӗвелтухӑҫ йеннеле сӑхсӑхрӗҫ те, кӗреҫисене ӗмӗр-ӗмӗр ака пуҫ ларман ҫерем ӑшне урисемпе пуса-пуса лартса, тӑпрана айккинеле ывӑта пуҫларӗҫ.



М 2467 | чув
Чувашская
республиканская

Ватти-вĕтти, хĕрĕ-хĕрарăмĕ пурте масар çине пуçтарăнчĕç. Каллех куççуль тăкăна пуçларĕ.

Акă, тарăн та сарлака масар шăтăкĕ хатĕр. Вилесене çĕклесе пырса шăтăка хучĕç.

— Тăххăрмĕшĕ ăçта?—Хĕрессем хушшинче чупкаласа çӳресе шырать Мăкăнь Хĕветĕрĕ. Хăй хăранипе чĕкĕнтĕр пек хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайнă. Хресченсем пĕрпĕрин куçĕсенчен пăхса илчĕç.

— Хурал тăратмалаччĕ... çĕр каçиччен кашкăрсем çисе кайнă пуль тăххăрмĕшне.

— Кашкăрсем? Ах шуйттан пуçĕсем!..

Çапла, тăхăр вилерен пĕри çук. Хăшĕ çук. Ăна Мăкăнь Хĕветĕрĕ пĕлеймерĕ.

— Чĕрĕле мар, виллисене те тытса чарма май çук вĕт ку шуйттан большевиксене... Пытарăр хăвăртрах! Унсăрăн тата хăшĕ те пулсан çухалĕ,—тесе васкатать Мăкăнь Хĕветĕрĕ.

— Ан хăра... кусем çухалас çук. Ĕмĕрлĕх ăйхăпах çывăраççĕ пурте,—терĕ хресченсенчен пĕри. Унтан çĕлĕкне хывса сăхсăхрĕ те, кăпка тăпрана кĕреçепе ăсаăса илсе, вилесем çине пăраха пуçларĕ.

Йĕрӳ-макăру çĕнĕрен пуçланса кайрĕ. Çав вăхăтра масар çине Мĕкĕте мучи тупăкне йăтса кĕчĕç.

— Авă тăххăрмĕшне илсе килчĕç,—терĕ тепĕр хресчен.

Мăкăнь Хĕветĕрĕ хулпуççийĕ урлă шурă куçĕпе çаврăнса пăхрĕ. Курчĕ вăл ку виле Мирун марринe, анчах Сырăв хăйне сыхлама хушса хăварнине аса илчĕ те шарламарĕ.

Çапла пĕр кунта тăххăрăн, ним айăпсăрскерсем, нӳрлĕ çĕр айне кĕрсе выртрĕç. Хĕрес вырăнне вĕсем çине ăвăс шалча ларттарчĕ Мăкăнь Хĕветĕрĕ.

## IV.

Тəркăнсем иккĕмĕш кун ĕнтĕ шыв йухăмне май тайга вăрманĕ йеннеле утаççĕ. Йалсем, утарсем тĕл пулаççĕ. Анчах пĕр йала та, утарсене те кĕмеççĕ вĕсем, айаккисенчен пăрăна-пăрăна иртсе кайаççĕ. Хырăмĕсем выçнипе шыв хĕрне ана-ана икшер-виçшер çăвар шыв сыпаççĕ те, кăштах канса ларсан, каллех тăрса утаççĕ.

Умĕсенчи утма çул генерал пакунĕ пек кукăр-макăр чăсăлса выртаť. Çырма шывĕ пысăкланнăçемĕн пысăкланаť. Сылтăм йенчен те, сулахайран та пĕчĕк варсем пыра-пыра хутшăнаççĕ.

Таркăнсем хырăмĕсем çав тери выçса çитнĕ пулсан та, малалах утаççĕ. Умĕсенче, çĕрпе пĕлĕт пĕр çĕре лексе тăракан вырăнта, тайга вăрманĕ кăвакăн-симĕсĕн курăнса тăраť.

Пайан виççĕмĕш кун ĕнтĕ ăша пĕр хĕлхем çăкăр илмесĕр утаççĕ. Ентрийĕн пĕтĕмпех вăйĕ пĕтсе çитрĕ. Йулташсенчен йулса, ўсĕр çын пек пуçне чиксе, каллĕ-маллĕ сулкаланса утаť. «Капла выçă касăлса çўриччен салтака кайнă пулсан лайăхрах пулнă пулĕччĕ. Хырăм тутă, çийĕм питĕ пулĕччĕ», тесе шухăшласа пыраť вăл халĕ хăй ăшĕнче. «Апла та вилĕм, капла та вилĕм... Калле çаврăнас та, кайас луччĕ салтака... Партизансем патĕнче те кулаç çитермеççĕ пулĕ»—тесе шухăшласа кайран-кайа йулса пыраť Ахмет.

Мирун хыçалала çаврăнса пăхрĕ. Кураť: йулташсем иккĕшĕ йулса пыраççĕ.

— Хыçалтан çитеççĕ! Сыхланăр!—хайаррăн кăшкăрса йарса, чупан пек турĕ вăл. Унтан çултан пăрăнса, курăк ăшне чăсăлса выртрĕ.

Аран-аран тайкаланса пыракан Ентрипе Ахмет урисене çĕре лектермесĕр, тусан кăларса, тапăлтатса чупса иртсе кайрĕç. Мирун, тўсеймесĕр, ахăлтатса кулса йачĕ.

— Ах, мур илесшĕ, хăратса вĕлеретĕн вĕт,—çул хĕрне чăсăлса ўкрĕ Ахмет, сывлăшне çавраймасăр.

— Шуйттан пакарти, епĕ чăнах та дружинниксем хыçалтан хăвалаççĕ тесе. Хăранипе хырăм выçнине те манса кайрăм,—тесе Мирунпа йунашар пырса выртрĕ Ентри.

— Дружинниксен аллисене лекес килмест-им?

— Вĕсене парăниччен луччĕ выçă вилем.

— Дружинниксен аллисене лексе вилсен те, выçă вилсен те пурĕ-пĕр вилĕм. Пĕрре вилмеле, икĕ хут мар, çуралсран йулманнине вилĕмрен йулас çук,—терĕ Ахмет, выртнă çĕртен пуçне çĕклесе.

— Пурĕ-пĕр пулсан чўречерен çўрĕччĕç. Темшĕн алăкран çўреççĕ. Апла пулсан пыр, пайанах дружин-

никсене кайса парӑн та: «Выҫӑ вилетӗп, вӗлерӗр мана» те. Апла тӑк мӗншӗн-ха есӗ шуррисен ҫарне салтака каймарӑн, хӑраса тартӑн? Унта хырӑму та тутӑ, ҫипуҫу та питӗ пулнӑ пулӗччӗ. Капиталиссем шуррисене апат, тумтир, хӗҫпӑшал парса тӑраҫҫӗ, вӗсем пуйан,— терӗ Мирун Ахмет ҫине шурӑ куҫӗпе ҫаврӑнса пӑхса. Унтан хӑвӑрт сиксе тӑрса малала утрӗ. Ахмет Мируна хирӗҫ тавӑрса калама сӑмах тупмарӗ. Намӑсланнипе пӗчӗк ача пек, пӗрре хӗрелсе, пӗрре шуралса кайрӗ, Мирун хыҫӗнчен тӑрса утрӗ.

Инҫетре мар, тимӗрпе витнӗ симӗс сӑрпа сӑрланӑ ҫуртлӑ утар курӑнать.

— Епӗ ҫак утара кӗрсе ҫӑкӑр ыйтса тухам-ха, унсӑрӑн ман пӗтӗмпех вӑй пӗтсе ҫите пуҫларӗ, — терӗ Ентри, Мируна хуса ҫитсе.

— Кӗрессе кӗр те... Анчах сыхланарах калаҫ унта...

— Ӑна ӗнтӗ пӗлӗпӗр. Пайан ҫеҫ ҫуралман вӗт,—мухтанса илчӗ Ентри. Унтан пуҫӗнчи картусне хывса, тӑмаланнӑ пуҫӗнчи ҫӳҫне кӗрепле шӑлӗ пек пӳрнисемпе шӑлкаласа йакатрӗ те, пушаннӑ йӗмне ҫӳлеле ҫӗклесе, утар йеннеле васкаса утрӗ.

Мирунпа Ахмет, ҫул ҫинчен кӑшт пӑрӑнса, тӑм ӳкнипе сарӑха пуҫланӑ курӑк ҫинче выртса йулчӗҫ.

— Ех, хырӑм выҫнӑ йенне, пӗрре туртса йарасчӗ те, тапак ҫук,—тесе хаш сывларӗ Ахмет.

— Тапакӗ-мӗнӗ тӗп пултӑрччӗ-ха, часрах тайгана ҫитсе, партизан отрйадне хутшӑнасчӗ, унта ҫӑкӑр та, тапак та пулӗччӗ,—терӗ Мирун.

— Унта пулӗччӗ те-ха, анчах хӑҫан ҫитсе ӳкӗпӗр... Тайга вӑрманӗ инҫе те мар ӗнтӗ, ав курӑнать,—терӗ Ахмет, Мирунпа килӗшсе, симӗсӗн-кӑвакӑн курӑнса ларакан тайга йеннеле тӑрса пӑхса...

— Тайгана ҫитме тата пӗр вӑтӑр-хӗрӗх ҫухрӑм ҫеҫ йулчӗ.

— Апла инҫе мар!—терӗ Ахмет савӑнса.

Ентри утар патнеле ҫывхара пуҫласан, ӑна хирӗҫ икӗ хура йытӑ чупса тухрӗҫ те, Ентри ҫине сиксе, хаҧ ҫуркаласа тӑкас пек вӗрме тапратрӗҫ. Ентри пӗшкӗнсе ҫӗртен пӗр чул муклашки илчӗ, пӗр йыттине тӗллесе

печĕ. Чул катăкĕ йыттăн шăп çамкинчен лекрĕ. Йытти вĕри шывпа сапнă пек йăнăша-йăнăша, утар йенеле чупрĕ. Иккĕмĕш йытти те хăйне лекесрен хăраса, айаккинеле кайса ларчĕ, уласа йачĕ.

— Мĕн йыт-качкасене вăрçтарса çӳретĕн?—утар пӳртĕнчен аçа-çиçĕм пек вăркăнса пĕр хĕрлĕ питлĕ, шĕвĕр сăмсалă, усăнчăк кăкăрлă хĕрарăм васкаса тухрĕ Ентрийе хирĕç.

— Епĕ вăрçтармастăп вĕсене, инке. Вĕсем хăйсем ман çине кĕреççĕ; сырттарас-им ман вĕсене?

— Ăçтисем есĕ, мĕн шыраса çӳретĕн?

— Епĕ-и? Епĕ раççейсем, Хусан кĕпĕрни йенчи, Çĕпĕре çĕнĕ çĕр пăхма килнĕччĕ. Вăрçă хускалса кайрĕ те, киле таврăнаймарăм, халĕ ĕç шыраса çӳретĕп,—терĕ Ентри, хĕрарăм куçĕнчен шăтарас пек пăхса.

— Ĕç шыраса? Сан пек çамрăксем ĕç мар шырамала... салтака каймала...

— Салтака? Салтака илмеççĕ мана, епĕ чирлĕ.

— Мĕн чирпе?

— Чахуткă,—хăй:—хм-хм-хм, ӳсĕрен пек туса илчĕ.

— Сăну-питӳ хĕрлĕ те. Пулĕ... Мĕн ĕçлеме пултаратăн есĕ чирлĕ çын?

— Епĕ хресчен. Хресчен ĕçне пурне те ĕçлеме пултаратăп. Ака тума, тырă вырма, вутă касма, выљăх пăхма т. ыт. те.

— Пире тарçă кирлĕ. Анчах халђ упăшкам килте çук. Ыран, вăл таврăнсан, килсе пăхăн.

— Ăçта кайнă вара сан упăшку?

— Ăçта кайасси мĕнĕ. Илтнĕ пуљ вĕт бољшевиксем тенине.

— Мĕнле бољшевиксем?

— Ху арçын, çавсене те пĕлместĕн? Ĕлĕк ĕмĕр-ĕмĕр тĕрмере ларнă разбойниксем халĕ ирĕке тухнă та, сынсене çаратса çӳреççĕ...

— Сан упăшку та вĕсемпе пĕрле халăха çаратса çӳрет-и? Çук апла пулсан епĕ сирĕн пата тарçа кĕместĕп!—терĕ Ентри, хĕрарăма пӳлсе.

— Ман упăшка вăл халăха çаратма мар, çав бољшевиксене тытма кайнă,—хайаррăн кăшкăрса йачĕ хĕр-

арăм. Хĕрлĕ питлĕскерĕн пичĕ çиллипе пушшех чĕкĕнтĕр пек хĕрелчĕ.

— Ах, мур пакарти! Дружинник арăмĕ вĕт ку шуйтан,—тесе шухăшларĕ Ентри хăй ăшĕнче. Унтан:

— Ĕ-е-е, ăнлантăм ĕнтĕ. Ыран килсе пăхăп еппин. Анчах пăртакçă çăкăр пулмĕ-ши сан, инке?—çăкăр йатне асăнсан, ирĕксĕрех сурчăкне ланкăрт çăтрĕ Ентри.

Хĕрарăм ним чĕнмесĕр пӳртнеле кĕрсе кайрĕ те, пĕр хăпарту кулач пек шурă çăкăр йатса тухса, Ентрийе пачĕ.

— Ыран кил.

— Йурĕ, инке, йурĕ,—терĕ Ентри, çăкăра хулхушши айне хĕстерсе. Унтан хапхаран тухса утрĕ. Хĕрарăм, кĕлин пăхса, тăрса йулчĕ. Тавтапуç та темерĕ. Бољшевик пулмарĕ-ши ку?—тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнче вăл.

Шăнкăртатса йухса иртекен шыв çинче хĕвел шевли выљаť. Таркăнсем шыв хĕрне куклене-куклене ларнă та, шывпа сыпса çăкăр çийеççĕ.

— Хырăм выçсан, шывпа çăкăр та аш йашки пекех тутлă,—терĕ Ахмет.

— Дружинник арăмĕ пĕçернĕ çăкăр вăл, çавăнпа пит тутлă,—хушса хучĕ Ентри.

— Чăнах-и? Çак утарта та дружинник пурнаť-и? Ак шуйттан,—тарăхса илчĕ Мирун тĕлĕнсе.

— Чăнах дружинник, хăй халĕ килте çук, арăмĕ çеç. Ыран таврăнасса кĕтет.

— Апла пулсан ку вырăнтан часрах вĕçтерер. Унсăрăн килсе тытма та пултараççĕ вĕсем пире,—терĕ Ахмет, хăраса ӳксе.

— Ха-ха-ха!.. Хырăм тăрансан дружинниксен аллине парăнассу килмест-им?—тесе, хуллен кулса илчĕ Мирун.

Çав вăхтăра, сасартăк виçĕ йуланут лашисене сиктерсе утар йенеле иртсе кайрĕç.

— Ав, килеççĕ,—терĕ Ентри. Хăй хăранипе хăйăр çине йарт чăсăлса ӳкрĕ.

Дружинниксем утар хапхи умне çитсе чарăнчĕç, икĕ хура йытă вĕсене хирĕç чупса тухса, хӳрисене пăтратса, лашисем тăрăх йăнăшса сике пуçларĕç.

— Кĕçĕр епĕр кунтан кайар мар, çакăнтах çĕр выртар,—терĕ Мирун, кăшт шухăша кайса.

— Мĕншĕн?—харăс кăшкăрса йачĕҫ Ахметпе Ентри.

— Мĕншĕн? Ак мĕншĕн. Пирĕн вĕсен хĕҫпăшалĕсене туртса илмеле. Партизан отрйадне хĕҫпăшалланса пырсан, пире тата та авантарах йышăнма пултараççĕ.

Мирун шухăшĕпе Ахметпа Ентри килĕшрĕҫ. Вара каç-ченех ҫыран хĕрринче дружинниксем мĕн ĕҫленине пăхса, мĕнле майсемпе хĕҫпăшалĕсене туртса илесси ҫинчен шутласа выртрĕҫ.

Каç пулчĕ. Хĕвел хăй выранне канма кайса курăнми пулчĕ. Кĕрхи ҫĕр тĕттĕм. Утар йенчен ӳсĕрпе йурланă сасăсем илтĕнеççĕ. Килкарти варринче йупа ҫумĕнче виҫĕ йĕнерлĕ лаша кăкарăнса тăраççĕ: ҫимелисем пĕтнипе чĕрнисемпе ҫĕре кукалеççĕ. Хутран-ситрен йытăсем вĕркелесе илеççĕ.

Ак, ҫурҫĕр ҫитрĕ пулас. Лупас айĕнчи автан ҫунаттисене шарт, шарт ҫапрĕ те уççăн авăтса йачĕ. Йурланă сасăсем шăпланчĕҫ. Пӳртре хăй ҫути сӳнчĕ.

Кăшт вăхăт иртсен, утар хапхи чĕрик туса уҫăлчĕ. Шак-шак!—шаккарĕҫ пӳрт алăкне.

— Кам унта?—илтĕнчĕ шалтан хĕрарăм сасси.

— Уç, епĕр хамăрăннисем!—терĕ Мирун. Майĕпен алăк уҫăлчĕ. Мирун, Ахмет тата Ентри шалала хăвăрт кĕрсе кайрĕҫ.

— Ай, туру-у!.. Пĕтрĕмĕр!—хайаррăн кăшкăрса йачĕ хĕрарăм.

Ахмет шăрпăк ҫутса йачĕ. Мирунпа Ентри ҫтена ҫумĕнче ҫакăнса тăракан пăшалсене йара-йара тытрĕҫ. Ҫутăлас май кайрĕ. Шурăмпуҫ ҫăлтăрĕ електрицă лампи пек ҫутăлса хăпарчĕ. Утар хапхинчен виҫĕ йуланут умлă-хыҫлă тухса кайрĕҫ.

— Халĕ ĕнтĕ епĕр таркăнсем мар, чăн-чăн партизансем,—терĕ Ахмет, хулпуççи урлă ҫакнă йаппун пăшалне тытса пăхса.

— Чăтса тăр ĕнтĕ, дружинă. Ха-ха-ха!—савăнăҫлă кулса илчĕ Ентри, утланнă лашине урисемпе хĕстерсе.

Ҫак каҫран вара утар ҫурчĕн чӳречисенчен хăй ҫути курăнми пулчĕ. Утара хураллакан икĕ хура йытă та таҫта кайса кĕчĕҫ, вĕрми пулчĕҫ.

## *ИККĔМĔШ СЫПĂК*

### I.

Йĕпе-сапалă кĕркунне иртсе кайрĕ. Йур çурĕ, хĕлле пулчĕ. Вăл çул хĕлĕ те ирсĕр пулчĕ: кулленех тенĕ пек куç уçса пăхмала мар тăман кĕрлесе тăрат; тăман кăшт лăплансанах, шартлама сивĕ çавăрса илет. Ирĕклĕ çын çавăн пек çанталăкра чăтлăх тайга вăрманĕ тăрăх, вăрман кайăкĕ пек, выçăлă-тутăлă, тăварсăр лаша ашĕ çисе, уйăхĕ-уйăхĕпе çывăрмасăр сĕтĕрĕнсе çӳреме мар, килте те кăмака çинче çеç лармала. Çук çав, самани кăмака çинче ларттараканни мар,—пĕр пуçласа йанă ĕçе пĕтересех пулат. Камăн нуша аллинчен ирĕке тухас килет, çавăн кутсăр-пуçсăр тăмана, шартлама сивве, выçлăха, пыйтăсем çинине пăхăнмасăр, аллине хĕçпăшал тытса, çав йӳçĕ, кăшмантан та йӳçĕ тайга нушине курасах пулат. Унсăрăн ĕç начар. Ахалĕн ыррине кĕтме çук; ĕçхалăхне, батраксене, чухăн, вăтам хресченсене хĕстермелипех хĕстереççĕ. Йалсенче те, хуласенче те, хапрăк-савăтсенче те, шахтăсенче те, кăшт çеç хĕрлисем майлă пулса калаçсан, айăплă-и, айăпсăр-и, ыйтса туса тăмаççĕ; тытаççĕ те, бољшевик тесе, чăсса вырттарса, çурăм тăрăх йе саламатпа, йе шомпăлпа хĕртеççĕ; йулашкинчен йе тĕрмене хупса лартаççĕ, йе пĕтĕмпех «леш тĕнчене» ăсатаççĕ. Çапла ĕçхалăхшĕн—виçĕ тĕслĕ «емел»: саламатпа шомпăл, тĕрме, вилĕм. Хут те хăшне суйласа ил. Çав виçĕ тĕслĕ «ѐмеле» ĕçсе-çийес килмесен, сыхланмали вырăн пур. Вăл вырăн Çĕпĕрти аслă тайга. Унта, уçă, сывлама çăмăл. Ирĕклĕх йуррисем йурласа, пĕтĕм хуйхă-суйхăсене манатăн.

> Илтетĕп епĕ, илтетĕп хыпарсем,
> Буржуйсем тĕнчипе хускалнă;
> Пăхăр-ха, пăхăр, йулташсем,
> Чурасем ăйхăран вăраннă...

Çак йурă кĕввисем вара, Урал тăвĕнчен пуçласа, Çĕпĕр тайгисем, хирĕсем тăрăх, Китай чиккине çитиччĕнех йантраса тăраççĕ. Вăл йурра ватти-çамрăкки, хĕрĕ-хĕрарăмĕ хуласенче те, хапрăк-савăтсенче те, шахтăсенче те, йалсенче те, утарсенче те йурлаççĕ...

Чăнах та буржуйсем тĕнчипех хускалнă çав, мĕншĕн тесен, ав, пăхăр-ха: шуррисен салтакĕсем, ула кураксем пек, ула-чăла курăнаççĕ; çийĕсенче—акăљчан тăлинчен çĕленĕ симĕс шинелсем; пуçĕсенче—француз картусĕсем йăлтăртатаççĕ, урисенче—Америкă пушмакĕсем, аллисенче—сарлака штыклă Йапони пăшалĕсем. Курман пĕлмен çын: акăљчан, француз, американĕц, йапонĕц пурте пĕр çĕре пăтранса кайнă тесе шухăшлĕ. Апла тесен татах ĕненес çук, мĕншĕн тесен хăйсем вырăсла, тутарла, мăкшăла, чăвашла, йеврейле тата Раççейре пурăнакан тĕрлĕ ытти халăхсен чĕлхипе калаçаççĕ. Çав тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан салтаксем хушшинче—австриле тумланнисем те пур. Чех салтакĕсем, офицерĕсем те курăнаççĕ. Вĕсем вара, леш ула кураксем пек ула-чăла салтаксенчен уйрăмăн, кăкăрĕсем тулли лайăх тумланнă, йăлтăр та йалтăр хĕрессем, медаљсем çапкаланса тăраççĕ. Вĕсем бољшевиксемпе вăйлăрах кĕрешеççĕ пулас. Çавăнпа та хаклă йышши пируссем мăкăрлантараççĕ; шоколад мармеладсемпе чей ĕçеççĕ; тутлă шăршăлă одеколонсемпе çăвăнаççĕ; çывăхĕсене пыма хал çук—таçтан шăршă çапса тăрать. Вырăс чĕлхине тĕрлĕ май хуçкаласа калаçаççĕ:

— Ми хазайăн. Çибир наша. Хаçу убйу, хачу памилую,—тет пĕр кăркка сăмсалă чех офицерĕ.

Чăнах та, чехсем аллине лексен вара чĕрĕ йулăп тесе ан та шухăшла...Хăйсем хуçа. Сăнĕсем санталпа хĕретнĕ пек хĕп-хĕрлĕ, чĕпĕтсенех йун сиксе тухса каймала. Мăнтăр, çитернĕ ăйăрсем пек. Çавăнпа та вĕсене çинçе пилĕклĕ, тутисене хĕретнĕ, куçхаршисене сăрланă хĕрарăмсем йуратаççĕ. Çав хĕрарăмсене вĕсем чĕркуççисем çине лартса, сăпкари пек сиктереççĕ. Хĕрарăмĕсем вĕсене ытала-ытала чуптăваççĕ. Лешсем:—Ми русски баба љўбĕм, —тесе ăçтан кирлĕ çавăнтан хыпалаççĕ. Унтан, черккесене хаклă йышши ерехсем тултара-тултара, хире-хирĕç шаккаса ĕçеççĕ. Ĕçнĕ хыççăн тутлă апат çийеççĕ.

Буржуйсем тĕнчипе хускалнă пулсан, чурасем те ăйхисенчен вăраннă. Вĕсем кутсăр-пуçсăр тăманран, шартлама сивĕрен хăрамасăр, пĕрерĕн-икшерĕн, вуншарăн,

çирĕмшерĕн, çĕршерĕн çурăмĕсем хыçĕсене кутамккасем çакса, аллисене пăшалсем тытса, хăшĕсем йĕлтĕрпе, хăшĕсем ахаљ, тайга тăрăх каллĕ те маллĕ партизан отрйачĕсене çитсе хутшăнасшăн ĕçлекенсемпе хресченсем çӳреççĕ. Пурте вĕсем хуласенчен, хапрăк-савăтсенчен, шахтăсенчен, йалсенчен, утарсенчен тухса тарнă çынсем. Пурте вĕсем çав ула-чăла салтаксен, сысна пек мăнтăр чехсен, дружинниксен аллисенчен хăтăлнăскерсем: хăшне саламатпа çапнă, хăшне шомпăлпа хĕртнĕ, хăшĕ тĕрмерен тухса тарнă, хăшĕ вилĕмрен çăлăннă, хăшĕсем салтака тытса кайнă çĕртен тарса хăтăлнă. Пурте вĕсем ашшĕсене, амăшĕсене, савнă арăмĕсене, упăшкисене, ачи-пăчисене, йуратнă хĕрĕсене пăраха-пăраха хăварнă. Вĕсем хушшинче, вуникĕ çулхи ачаран пуçласа, çитмĕл-сакăрвун çулхи шурă сухаллă пĕрĕнчĕк питлĕ-куçлă стариксем те, карчăксем те пур. Халĕ вĕсем пурте пĕрле, пĕр сывлăшпа кăкăр тулли сывлаççĕ. Вĕсен йурри хăлхана çивĕчĕ çил пек касать. Чĕрисем тимĕрçĕ мăлатукĕ пек шакаççĕ. Куçĕсем шăтарас пек йăлт-йалт пăхкалаççĕ. Тĕсĕсем вĕсен çилĕлĕ. Ăнсăртран аллисене çав ула-чăла салтаксем, йе чехсем, йе дружинниксем çитсе лексен, çавăнтах çуркаласа тăкма хатĕр. Вĕсен çав тери тулса çитнĕ çиллине, çак хĕл сивви мар, витрелесе шыв сапсан та лăплантарас çук. Çулăмланса çунакан çилле пĕр йурă çеç кăшт лăплантарма пултарать:

> **Епĕр тайгара пурнатпăр,**
> **Тăварсăр лаща аш çисе;**
> **Çитĕ вăхăт, ирĕккĕн сывлăпăр**
> **Буржуйсене çĕнтерсен..**

Çак йурра йурлакансем хăйсем çĕнтерессине питĕ лайăх пĕлеççĕ. Анчах хăçан,—ăна тӳрĕ калама пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен йалан шуррисен каратĕлни отрйачĕсем партизансене çавăрса тытса илесшĕн йĕрлесе çӳреççĕ; партизансем шуррисене тытасшăн тăрăшаççĕ. Çапла ĕнтĕ, икĕ вăй иккĕмĕш хĕл пĕрне-пĕри тытса илесшĕн хăваласа çӳрет; хăш чух хăйсем те астумаççĕ, пĕр йалтах—шуррисем пĕр вĕçĕнче, партизансем тепĕр вĕçĕнче, çĕр выртса, ĕçсе-çисе тухса кайаççĕ.

Хресченсем партизансене ĕçтерсе-çитерсе хăна туса йăраççĕ, мĕншĕн тесен партизансем, хăйсем пекех, хресченсем, ĕçлекенсем, тата çывăх тăвансем. Тепĕр йенчен кам пĕлет: пайан партизансем вĕсен килĕсенче, тен ыран, йе тепĕр кун хăйсен те çак партизансемпе пĕрлех, йунашар тăрса, шуррисемпе çапăçмала пулаť...

Шуррисем партизансем пек мар, хăна тăваса кĕтсе тăмаççĕ, йала пырса кĕрсен пурри-çуккине те ыйтса тăмаççĕ. Тӳрех:—Давай!—тесе кăшкăраççĕ. Вăхăтра тупса параймасан, тытса чăсса выртараççĕ те çурăм шăммисене суйлаççĕ. Вара ирĕксĕрех тупса паран. Хăш чухне ыйтса та тăмаççĕ, хăйсем аллисемпе илсе, хăйсене-хăйсем хăналаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн?—вĕсен ирĕк. Вĕсен аллинче хĕçпăшал. Ирĕксĕрех пăхăнас пулаť, пăхăнмасан вăйпа пăхăнтараççĕ.

## II.

Çур хĕл çывхараť. Раштав сиввисем çитрĕç. Çанталăк шурă тĕтре ăшне кĕрсе ӳкрĕ. Тайга çиййĕ, шап-шурă йăвăç вуллисем шарт та шарт çурăлаççĕ. Вăхăт-вăхăт вăрман тупăпа пенĕ пек кĕрлесе кайаť. Кайăк-кĕшĕксем таçта пытанса пĕтнĕ, сасси-чĕввисем те илтĕнмеççĕ. Анчах улакаткасем хăрамаççĕ, вĕсем ир пуçласа каçченех, тр-р-р-р йантратса, çĕрме пуçланă йăвăç хупписен айĕсенчен хурт-ăмансем тупса, выçă хырăмĕсене тăрантасшăн ĕçлеççĕ. Тата хутран-ситрен тăманасем ӳхлетсе кăшкăра-кăшкăра йараççĕ.

Хĕвел хăлхаланса тухнă та, йăвăç тăррисене лекес пек айалтан шуса иртет. Йепле сивĕ пулсан та, çил лекмен çĕрте хĕвеле хирĕç тăрсан, питçăмартисене ăшăтнă пек туйăнаť.

Тайга хĕрринчен инçе те мар кăшкăрашнă, йурланă сасăсем илтĕнеççĕ. Унта—партизан отрйачĕ, шуррисен каратĕлни отрйачĕсемпе икĕ тавлăк çапăçнă хыççăн, кăшт канма чарăннă. Шуррисем, çанталăк ытла сиввине тӳсеймесĕр, йала чакнă. Çавăнпа партизан отрйачĕ нимрен хăрамасăр ирĕклĕн канаť. Икĕ тавлăк апат çимен, шыв ĕçмен лашисем лапсăркка чăрăш, пихтă, кедр айĕсенче кăкарăнса тăраççĕ; умĕсенче, утă вырăнне, пихтă, чă-

рăш, кедр хуллисем выртаççĕ. Выçă лашасем пӳрне хулăмĕш патаксене хыпса шатăртаттарса чăмлаççĕ; тарлăскерсем, сивĕнсе шăннăскерсем, ăшăнасшăн, малти урисемпе йура кукалесе, çĕре çитичченех ана-ана кайнă та, пуçĕсене чиксе, хӳрисене çӳлеле тăратса тăраççĕ. Тăрсан-тăрсан сăмси шăтăкĕсене тавăрса тулхăра-тулхăра илеççĕ.

Партизансем хăйсем кĕрлесе çунакан вут куписем йĕри-тавра ункă пек çаврăнса тăнă та ăшăнаççĕ; хăшĕсем вут умне чĕркуçлана-чĕркуçлана ларнă, хăшĕсем айĕсене çапăсем пăрахса чăсăла-чăсăла выртнă. Канаççĕ. Анчах икĕ тавлăк çимесĕр хырăмĕсем выçнă, çывăрмасăр, çапăçса ывăннă пулсан та, пурте савăнăçлă, çийес килет тесе калакан та çук. Вĕсемшĕн сивĕ те сивĕ мар: çавăнтах ташлаканнисем те, йурлаканнисем те, купăс калаканнисем те пур. Вĕсене курман çын курсан, вăрăхурахсем тесе, хăраса ӳкĕ. Мĕншĕн тесен икĕ çул хушши пĕр канмасăр шуррисемпе çапăçнипе хăйсене - хăйсем тирпейлеме вăхăт çук, çавăнпа вăрăм çӳçленсе, сухалланса пĕтнĕ; йалан сивĕ çил çинче çӳренипе питçăмартийĕсене тăм илнĕ, тутисем çуркаланнă. Çийĕсене пăхма хăрушă. Йепле кăна тӳсеççĕ-ши вĕсем çак тери 40 градуслă Çĕпĕр сиввине? Тĕлĕнмеле! Хăшĕсем çĕтĕк-çатăк кĕрĕксемпе, хăшĕсем тăла сăхмансемпе, хăшĕсем салтак шинелĕсемпе, хăшĕсем йытă тирĕнчен çĕленĕ дохасемпе, урисенче те çавах—хăшĕ çăпатапа, хăшĕ çĕтĕк çăматăпа, хăшĕ сăран пушмакпа, хăшĕ атăпа; пуçĕсенче хăшĕн çĕлĕк, хăшĕн картус, хăшĕн шĕлепке, хăшĕн кăркăс мулахайĕсем. Çĕлĕкĕсем çумĕсене хĕрлĕ пусмасем çĕле-çĕле йанă, вĕсем çиллĕ кун вĕл-вĕл вĕçкелесе тăраççĕ. Арçынне хĕрарăмне паллама май çук, мĕншĕн тесен пурте арçын тумтир тăхăннă, калаçнинчен çеç уйăрма пулаť. Пурте хĕçпăшаллă. Хăшĕн аллисенче винтовкă, хăшĕн ахаљ пăшалсем; хăшĕн хулпуççийĕсем урлă пулемет лентисем çавра-çавра çыхса йанă, хăшĕсен пилĕкĕсем çумĕсенче гранатăсем, бомбăсем çакăнса тăраççĕ.

Партизансен сассипе Çĕпĕр тайги кĕрлесе тăраť. Выçă хырăмĕсене тăрантасшăн улакаťкасем ĕçлеççĕ. Пĕр-

пěрне çухатнă пек хире-хирĕç: ўх те, ўх! кăшкăраççĕ тăманасем. Таçта инçетре те кашкăр, те рыç улаť...

— Йулташсем, кăшт лăпланăр-ха,—терĕ сылтăм аллине çўлеле çĕклесе отрйад пуçлăхĕ Лубков.

Туйхалăхĕ пек кĕрлекен отрйад шăп пулчĕ. Партизансем пурте, пуçĕсене пăрса, Лубков йеннеле пăхрĕç.

Партизансем хăйсен пуçлăхне йуратаççĕ, ун сăмахне итлеççĕ; вăл хушсассăн халех çунакан вутта кĕме те хатĕр. Лубкова йуратмасăр, ун сăмахне итлемесĕр ăçта кайччăр. Вăл вĕт Черемхов шахтинчи шахťор. Икĕ çул ĕнтĕ вăл йертсе çўрет вĕсене. Малтанах Лубковăн отрйадĕнче пурĕ виçĕ çын пулнă, виçĕ çынна—пĕр пăшал. Халĕ ĕнтĕ пилĕк пин çын ытла. Кашни хĕçпăшаллă. Тата отрйадра икĕ пулемет. Отрйад кашни кун ўсет; кашни кун вуншарăн, çирĕмшерĕн, çĕнĕрен-çĕнĕ вăй—ĕçлекенсемпе хресченсем—пыра-пыра хутшăнаççĕ. Çапла Лубков отрйачĕ ўснĕçемĕн ўсет, вăйланнăçемĕн вăйланаť. Отрйачĕ ўссе пынă май, Лубковăн чаплă йачĕ те Çĕпĕр йалĕсем, хулисем, хапрăк-савăтсем тăрăх сарăлаť. Хăшĕсем ăна мухтаççĕ, хăшĕсем хурлаççĕ; хăшĕсем вăрăм ĕмĕр сĕнеççĕ, хăшĕсем вилĕмĕ çитессе кĕтеççĕ. Мĕн кăна каласмаççĕ-ши вăл Лубков çинчен. Пуринчен ытла чиркўсене кĕлле пуçтарăнсан Лубков çинчен калаçаççĕ. Пупсем Колчакшăн, тата ун çĕрĕшĕн кĕлтăваççĕ. Лубков отрйадне çĕнтерме атте турăран, ывăл турăран, çветуй сывлăш турăран,—турă амăшĕнчен тата такăшĕсенчен те пулăшу ыйтаççĕ. Кулаксем, пупсем пĕрер тенкĕлĕх çуртасем çутса, чĕркуççийĕсем çине чĕркуçленсе ларса:

— Ей, турăçăм-пўлĕхçĕм, пĕтерех çав антихриса. Мĕншĕн астарса çўрететĕн,—ўке-ўке пуççапаççĕ.

Çук, хуť те мĕн чул кĕл тусан та, турăсем пулăшмаççĕ. Лубков отрйачĕ пĕрех шуррисен отрйачĕпе çапăçаť, тулашаť.

— Лубков антихрис мар, вăл хамăр пекех çын. Вăл Черемхов шахтинчи шахťор, сапожник ывăлĕ пулнă. Германи вăрçи вăхăтĕнче унтĕр-офицера тухнă. Ăслă çын. Çырăва ăста,—тесе калаçаççĕ ăна пĕлекен, тата Германи вăрçи вăхăтĕнче унпа пĕрле окопра ларнă çынсем.

— Ку çунакан вут куписем тавра тахăçанччен ăшăнса тăрсан та усси пулас çук. Лашасем те выçă, хамăр та иккĕмĕш тавлăк çимен. Хамăр тата пĕр-ик тавлăк тӳсме пултаратпăр. Анчах лашасене тăрантас пулаť. Лашасемсĕр йулсан епĕр вăрçă çыннисем мар. Лашасем ывăнсан, пире, пăчăрсене тытнă пек, пĕрерĕн-пĕрерĕн персе—тытса пĕтереççĕ. Йĕри-таврари йалсенче пуринче те шуррисен отрйачĕсем тăраççĕ.

— Мĕнле хăтăлас вара пирĕн ку тыткăнран?—тесе темиçе сасă харăс кăшкăрса йачĕç Лубкова хирĕç.

Лубков партизансем çине йĕри тавра пăхса çаврăнчĕ те:

— Мĕнле хăтăлас. Камăн шуррисен аллине лексе вилес килмест, çав халех йĕлтĕр çине тăрса, шуррисем хăш йалта, мĕн чухлĕ иккенне пĕлсе килес пулаť. Вара пĕтĕм вăйа хурса, йалтан шуррисене хуса кăларса, хамăрăн кĕрес пулаť. Кам разведкăна кайаť, тухăр малала,—терĕ.

— Епĕ, йулташ Лубков!

— Епĕ!

— Епĕ те!.. çич-сакăр партизан малала туха-туха тăчĕç. Вĕсем хушшинче Мирунпа Ахмет та пур. Мирунăн суранланнă алли тӳрленнĕ. Ахмет сухалланса, пуп пек вăрăм çӳçленсе кайнă. Çирĕмикĕ çулхискер—хĕрĕх çулхи çын пек курăнаť. Вată сăнлă.

— Ытла нумайăн кайсан усси пулмĕ. Мирунпа Ахмет çеç кайччăр. Вĕсем ку таврари йалсене лайăх пĕлеççĕ,—терĕ Лубков кĕскен.

Çавăнтах Мирунпа Ахмет урисене йĕлтĕрсем тăхăнчĕç те, çăра йăвăç вуллисем хушшине кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç. Ытти партизансем вĕсене куçĕсемпе ăсатса пăхса тăрса йулчĕç.

— Хăш йалта пуррине пĕлсен, пĕри унта йулăр, тепри васкаса калле килĕр. Анчах сыхланăр, шуррисен аллисене ан лекĕр,—тесе кăшкăрса ăсатса йачĕ Лубков.

Мирунпа Ахмет курăнми пулсан, каллех ĕлĕкхи пекех—йурă, ташă, кăшкăрашу пуçланса кайрĕ.

Йанраť тайга...

## III.

Мирун малтан, ун хыҫӗнчен Ахмет, ҫӑра йӑвӑҫ вуллисем хушшисенчен пӑркалана-пӑркалана, тайгапа пыраҫҫӗ. Сивӗрен пытанса ларнӑ пӑчӑрсем, ӑсансем, лапӑстатса вӗҫе-вӗҫе тухса, йӑвӑҫ тӑррисем ҫине ларса, мӑйӗсене тӑсса пӑхса ӑсатса йараҫҫӗ.

— Ҫакӑнта, иксӗмӗртен пӗри шуррисен аллине лекес пулсан, мӗнле майпа пӗрне-пӗри хӑтарӑпӑр. Ҫавӑн ҫинчен сӑмах пӗтерер,—терӗ Ахмет, чылай вӑхӑт шусан.

— Мӗнле хӑтарасси паллӑ, чӗрӗ йулнин тӳрех отрйада пӗлтермеле.

— Отрйада ҫитсе пӗлтериччен вӗсем вӗлерме те пултараҫҫӗ.

— Вӗлерсен мӗн тӑвас тен? Ҫавӑншӑн вӑрҫӑ, йе вӗсем, йе епӗр. Пӗр шӑтӑкра икӗ упа пурӑнма пултараймасҭ.

Ҫапла калаҫса пынипе Мирунпа Ахмет сисмен те, тайга хӗрне ҫитсе те тухнӑ. Вӗсенчен инҫе те мар— пӗр чиркӳлӗ йал курӑнаҭ. Чиркӗвӗн ылтӑн хӗресӗ сивӗ сывлӑш ӑшӗнче вут пек йалтӑртатса ҫунаҭ...

Хӗллехи кун кӗске. Хӑлхаланса ҫунакан хӗвел часах каҫалана сулӑнчӗ. Каллех тӑман тухасшӑн пулас, ҫил тухрӗ. Ҫанталӑк кӑшт ӑшӑтнӑ пек туйӑнчӗ.

Мирунпа Ахмет хире тухса ҫитрӗҫ. Йӗри-тавра утӑ капанӗсем курӑнаҫҫӗ.

— Хаљ ҫутӑ-ха. Йала кӗме хӑрушӑ. Хӗвел анса тӗттӗм пулсан тин кӗрӗпӗр. Унччен ҫак капан патне кӗрсе канар,—терӗ Мирун, йӗлтӗрӗсен пуҫӗсене пӗр йӗкӗр капан йеннеле пӑрса. Ун хыҫӗнчен Ахмет та пӑрӑнчӗ.

Йӗкӗр капан хушшине кӗрсе ларчӗҫ те, хӗвел анса тӗттӗм пуласса кӗтеҫҫӗ.

— Мӗскӗн Ентрийе мӗнле асаплантарса вӗлерчӗҫ-ши? Шел,—терӗ чылай ларсан Ахмет, хӑш сывласа.

— Мӗнле? Паллӑ! Малтан шомпӑлпа, унтан пӗлетӗн: йе пӑшалпа персе, йе ҫакса хурса...

— Итле-ха, Мирун йулташ. Тен ӑна вӗлермен те тӗр...

— Кам пӗлет... Калама йӑвӑр. Тен вилӗ, те чӗрӗ. Йала кӗрсен ыйтса пӗлӗпӗр. Хресченсем каласа парӗҫ ӑҫта хунине.

— Сан ку йалта пӗлекен ҫынну пур-и?

— Пур, арӑмӑн йӑмӑкӗ—пултӑр, тарҫӑра пӗр пуйан патӗнче пурӑнаҭ.

— Апла пулсан ун патне кӗрсе ыйтӑпӑр-ха.

— Пӗлӗттӗмӗр те-ха. Часрах каҫ пулмасҭ. Пайан кунӗ те вӑрӑм пулчӗ. Каласа пар-ха, мӗнле вӑл Ентри дружинниксен аллине ҫитсе лекрӗ? Санпа пӗрле пулнӑ вӗт вӑл. Есӗ мӗнле хӑтӑлтӑн?—тесе ыйтрӗ Мирун.

— Епӗр унпа иксӗмӗр разведкӑна кайнӑччӗ,—калама пуҫларӗ Ахмет:—Дружинниксем хӑш йалта тӑнине пӗлтӗмӗр те, калле отрйада ҫаврӑнтӑмӑр. Пыратпӑр ҫулпа, калаҫса. Вӑхӑт ҫак пайанхи пекех, каҫ пулса килет. Сасартӑк хыҫалала ҫаврӑнса пӑхрӑм, куратӑп, пирӗн хыҫра йуланутлӑ дружинниксем вӗҫтерсе киле параҫҫӗ: «Лекрӗмӗр, Ентри, аҭа, хӑвала хӑвӑртрах лашуна!—тесе кӑшкӑртӑм та, ҫултан пӑрӑнса, пӗр тарӑн вар тӗпнеле анса кайрӑм. Вӑл ман хыҫран пӑрӑнмарӗ: ҫулпа тарса хӑтӑлӑп терӗ пулас... Ҫавӑнтах ӑна хуса ҫитсе, ҫавӑрса тытса илчӗҫ те лаша хӳринчен кӑкарса илсе кайрӗҫ. Епӗ варӑн тепӗр йенне каҫса, пӑхса тӑтӑм. Ман хыҫран хӑвалама кӗмерӗҫ, мӗншӗн тесен варта йур тарӑн. Лашисем путса ларасран хӑрарӗҫ пулас. Ех-ех-ех! вӗлерчӗҫех пуљ ҫав мӗскӗне. Чипер ачаччӗ вӑл. Ейпет мӑкшӑ ачиччӗ вӑл,—терӗ Ахмет вӑрӑмӑн сывласа йарса.

Каҫ пулчӗ. Ҫанталӑка каҫхи тӗттӗм сӑнӗ ҫапрӗ. Ҫил вӑйланнӑҫемӗн вӑйланаҭ. Сивӗ ҫил ҫурҫӗр йенчен ҫӗлен пек шӑхӑраҭ. Ҫӗр ҫумӗнчен вӑшӑлтатса йур вӗҫет. Мирунпа Ахмет, вӑрӑсем пек, анкартисем хыҫӗсенчен ҫаврӑнса, йала пырса кӗчӗҫ. Йалта шӑп. Хутран-ситрен йӑтӑсем вӗркелеҫҫӗ. Шурилнӗ куҫсем пек шап-шурӑ шӑннӑ чӳречесем витӗр йӑлтӑр-йӑлтӑр хӑй ҫутисем курӑнаҫҫӗ. Унтан ӳсӗр сасӑсем калаҫни, йурлани, ташлани илтӗнет.

— Раштав праҫникӗ тӑваҫҫӗ пулас, ӗҫеҫҫӗ хресченсем,—пӑшӑл-пӑшӑл калаҫса илчӗҫ Мирунпа Ахмет. Унтан урам варрине тухрӗҫ те, урисенчи йӗлтӗрӗсене хывса аллисене тытрӗҫ.

— Хăш çуртра, кам патĕнче пурăнатăн сан пултăр?— хуллен ыйтрĕ Ахмет.

— Ав унта, инçе мар,—Мирун пуçне тайса кăтартрĕ пĕр пысăк çурт йеннеле. Тата кăшт калаçкаласа тăчĕç. Унтан, унтала-кунтала пăхкаласа, урам тăрăх утрĕç.

Пыраççĕ. Сасартăк кĕтмен çĕртен вилес пек хайар саспа:

— Разбой! вĕлерет! пулăшăр!—тесе çухăрса кĕпе вĕççĕн, çӳçне-пуçне лапăстаттарса урам варрине чупса тухрĕ пĕр хĕрарăм. Ун хыçĕнчен пĕр ӳсĕр арçын чупса çитсе, хĕрарăма ыталарĕ те, йур çине çавăрса ӳкерчĕ. Мирунпа Ахмет, мĕн иkенне пĕлмесĕр, чарăнса тăчĕç. Хĕрарăм, пĕтĕм вăйĕпе: ахлатса, арçын айĕнчен тухасшăн тапаланать.

— Пăх-ха, пăх, ӳсĕрскер арăмне хĕнет! Айта чарар,— терĕ Ахмет хуллен.

— Суккăр-и мĕн есĕ? Дружинник вĕт вăл, хĕрарăма вăйпа намăслама тăрăшать,—терĕ те Мирун, сасартăк арăслан пек чупса пырса, хĕрарăмна кĕрешекен дружинника пуçĕнчен пăшал приклачĕпе тăрслатарчĕ. Дружинник вăкăр пек мĕкĕрсе йăванса кайрĕ.

Хĕрарăм ури çине сиксе тăчĕ те, хăранипе нимĕн тума пĕлмесĕр, çуркаланса пĕтнĕ кĕпи тăрăх пăхкаласа тăрать. Куçĕсем чалăрса кайнă; тĕсĕ кĕл пек кăн-кăвак; хăй сивĕ тытнă пек пĕтĕм пĕвĕпе сиксе чĕтрет.

— Наçтук, есим ку?—терĕ Мирун, хĕрарăм çине тайăлса пăхса.

Хĕрарăм пушшех хăрарĕ пулас, йалт сиксе ӳксе, кутăн-кутăн чакрĕ.

— Ан хăра. Епĕ—Мирун йысну.

Хĕрарăм аллисемпе хăлаçланса чупса пычĕ те, Мируна мăйĕнчен ыталаса илчĕ.

— Йысна, есĕ-им ку? Тавтапуçах сана мана çăлнăшăн,—пĕрре тутисенчен, пĕрре питçăмартисенчен темиçе хутчен чуптурĕ.

— Йе, çитĕ! Кайран калаçăпăр. Халĕ каласа пар. Йалта дружинниксем нумай-и?

— Пĕр пилĕк çĕр çын пур пуль. Кашни килĕрех пилĕкшерĕн-улташрăн тăраççĕ. Шăнса килнĕ çинчен ĕçеççĕ;

нумайӗшсем вилӗ ӳсӗр выртаççӗ. Начальникӗ пуп патне чарӑннӑ, вӑл та ӗçет,—терӗ хӗрарӑм чӗтрекен сассипе.

— Тыткӑна лекнӗ партизан çук-и вӗсен аллинче? Пӗлместӗн-и?

— Пур. Ӑна пуп нӳхрепне хупса лартнӑ. Ирхине, хӑйсем йалтан тухса кайнӑ чух вӗлерсе хӑвармала тесе калаçаççӗ. Хаљ ыйтса тӗпчеççӗ пулас.

— Ахмет йулташ, есӗ халех отрйада кай. Епӗ унччен тата лайӑхрах пӗлме тӑрӑшӑп. Анчах васка. Çутӑличчен отрйад кунта пултӑр.

Урӑх калаçса тӑмарӗç. Ахмет йӗлтӗрсене тӑхӑнчӗ те, пуçӗнчи çӗлӗкне пусарах лартса, йалтан çил пек вӗçсе тухса кайса, курӑнми пулчӗ.

— Шӑнтӑн пулӗ есӗ, Наçтук. Кӗр пӳрте. Анчах мӗн пулни, мӗн курни, мӗн илтни çинчен никама та ан шарла. Кӗрсе халех тумланса тух та, килӗрен киле каласа çӳре: камӑн мӗн чухлӗ ерех пур, ан шеллеччӗр, дружинниксене ӗçтерччӗр.

— Йурӗ,—терӗ Наçтук, хӗпӗртесе.

Наçтук пӳртеле кӗрсе кайрӗ.

Мирун пуп çурчӗ патне пырса çитрӗ. Пӑхаť,—пӳрчӗ умӗнче пысӑк мар йӑвӑç сачӗ; унта туллийех пихтӑсем, чӑрӑшсем, кедрсем лартса тултарнӑ. Мирун ун-кун шухӑшласа тӑмарӗ, тӳрех çав сата йалтлатса сиксе кӗчӗ те пӗр лапсӑркка кедӑр тӑррине кушакла улӑхса ларчӗ.

Пуп пӳрчӗн чӳречи икӗ хутлӑ, вӗсем, сивӗ вӑхӑт пулсан та, шӑнман. Шалта мӗн ӗçлени, мӗн туни Мируна питӗ лайӑх курӑнаť. Пӳртӗнче тӑватӑ пӳлӗм; пӗр пӳлӗмӗнче пысӑк лампӑ çунаť. Ытти пӳлӗмӗсем тӗттӗм. Хӑйçутилӗ пӳлӗмӗн вӑтаçӗрӗнче шурӑ çитӗ витнӗ пысӑк сӗтел лараť. Сӗтел варринче графинпа ерех тата апатçимӗç. Сӗтел умӗнче пуп хыçлӑ пукан çинче пысӑк хырӑмне каçӑртса, кукша пуçне çутатса лараť. Пуппа йунашар Мӑкӑњ Хӗветӗрӗ; унпа йунашар Сырӑв. Сырӑва хирӗç пуп арӑмӗ. Пурте хӗрӗнкӗ. Хӗрсе кайса картла вылаççӗ. Пуп выљаса йараť пулас, карчӗсене çӳлеле çӗкле-çӗкле çапаť, Сырӑв çине сӑмси тӑрӑх чалӑшӑн пӑха-пӑха илет. Мӑкӑњ Хӗветӗрӗ илмест те йамасť те пулас, çавӑнпа вӑл графин çинчен куçне илмест. Кӑшт

ларсан тултарат̆ те ĕçет, тултарат̆ те ĕçет. Сырăв выљаса илет пулас, мĕншĕн тесен вăл пуп арăмĕ çине пăхса, тутисене йăл-йăл култарат̆.

Мирун çак картинăна кедр тăрринчен екран çинче кинокартинă пăхнă пек курса ларат̆.

Акă пуп укçине пĕтĕмпех выљаса йачĕ пулас, çиллипе вăл, хăвăрт сиксе тăрса, аллинчи картне сĕтел çине пăрахрĕ те алăкăн-тĕпелĕн пăхса çаврăнчĕ. Унтан сĕтел умне пырса, графинтан умлă-хыçлăн виç-тăват черкке ерех тултарса ĕçрĕ, тайкаланкаласа, тулала тухса кайрĕ. Мăкăњ Хĕветĕрĕ, çурăмĕ çине кайса ӳксе, пуп хыçĕнчен кулса йулчĕ. Картла выљасси пĕтрĕ. Мăкăњ, ура çине тăрса, пĕр черкке тултарса ĕçрĕ те, шинелне хулпуççи çине çакса, тулала тухса кайрĕ. Сырăв, матăшкăна аллинчен çавăтса, тĕттĕм пӳлĕмеле илсе кĕчĕ.

Пĕр вунă минут вăхăт иртсен, ӳсĕр пуп çапкаланса пӳрте кĕчĕ. Пăхат̆,—пӳртре никам та çук. Сĕтел çине аллисемпе тайăнса тăчĕ, унтан татах ик-виç черкке ерех тултарса ĕçрĕ, кĕтесре ларакан çемçе диван çине йăванса кайса выртрĕ.

Йал лăпланчĕ. Дружинниксен ӳсĕр сассисем илтĕнми пулчĕç. Хăйçутисем пĕрин хыççăн тепри сӳнсе пĕтрĕç. Тухма пуçланă тăман чарăнчĕ. Çанталăк каллех уйартса сивĕтрĕ. Кăвак пĕлĕт çине вĕçĕ-хĕррисĕр çăлтăрсем тухса тулчĕç. Вĕсем хаљ çĕре персе ӳкес пек йăлт-йалт сиккелесе выљаççĕ. Çурçĕр çитесси инçе мар,—Алаçăлтăр тӳпенех улăхса çитрĕ. Тайга йенчен вутăн-хĕмĕн çунса, тулли уйăх хăпарчĕ. Тĕксĕм çĕр çап-çутă çутăлчĕ.

Кедр тăрринче ларакан Мирун ларсан-ларсан кăшт шăннă пек пулчĕ; ик-виç уйăх мунча кĕмен, тарпа хытнă ӳчĕ чĕтресе кайрĕ.

Ак, чылай вăхăт иртсен, Сырăв, симĕс тăларан çĕленĕ лӳчĕркеннĕ галифен çунаттисене тӳрлеткелесе, тĕттĕм пӳлĕмрен тухрĕ. Вăл диван çинче çывăрса выртакан пуп çине пăхса, аллисене çӳлеле çĕклесе анасларĕ те, сĕтел умне пырса пĕр черкке ерех тултарса ĕçрĕ.

Мирун чăтса ларай марĕ, сивĕ тытнă пек пĕтĕм пĕвĕпе чĕтресе, пăшалне сылтăм хулпуççи çумне тăрелерĕ те шăп Сырăвăн чĕри тĕлĕнчен тĕллесе кĕрлеттерсе йачĕ.

Пăшал сасси урамсем тăрăх, тайга вăрманĕ йеннеле ахăлтатса кулса саланчĕ. Икĕ хутлă чўрече кĕленчисем çĕмĕрĕлсе анчĕç. Сырăв чĕри тĕлĕнчен аллисемпе йарса тытрĕ те касса йанă йăвăç пек урайне тирĕнсе анчĕ.

Пăшал сассине илтсе матăшкă, çўçне-пуçне лапăстаттарса, тĕттĕм пўлĕмрен сиксе тухрĕ.

— Разбой! Вĕлереççĕ!—матăшкă çинçе çассипе сысна çури пек йантратса, тулала тухса чупрĕ.

Пуп та, пăшал сассинчен хăраса, ăйхĕнчен вăранчĕ. Вăл йалтлатса сиксе тăрса, мĕн пулнине пĕлмесĕр, тăмана пек, пĕрре йун йухтарса выртакан Сырăв çине, тепре çĕмрĕк чўрече çине пăхкаласа ларaт.

Матăшкă пĕтĕм йала йантратса çухăраt. Ун сассипе пĕрле йалти йытăсем вĕрме пуçларĕç. Çурçĕр çитрĕ пулас. Автансем те, çунаттисемпе шарт-шарт çапса, авăтса йачĕç.

Пĕр вăхăта ним ăнланмала мар пулса çитрĕ: матăшкă çухăраt, йытăсем вĕреççĕ, автансем авăтаççĕ; çав вăхăтрах тата йал вĕçĕнче сасартăк пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç. «Отрйад çитрĕ» шухăшларĕ Мирун.

— Партизансем... Партизансем... йала партизансем çавăрса илнĕ. Кам, мĕнле пĕлет—çапла сыхланăр!—кăшкăрма тытăнчĕç йалта.

Пăшал сассисем çăраран-çăра кĕрле пуçларĕç. Матăшкă çухăрма чарăнчĕ. Йытăсем вĕрни те автансем авăтни те илтĕнми пулчĕ. Вĕсем вырăнне йал урăх сасăсемпе кĕрлеме пуçларĕ.

— Партизансем!..

— Ăçта кăмандир?..

— Сыхланăр!..

Дружинниксем хăшĕ йуланутпа, хăшĕ çуран, хăшĕ çарамас, хăшĕ çара пуçăн, ниçтала тухса тарма пĕлмесĕр, урамсем тăрăх каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ. Сивĕ сывлăш ăшĕнче çулахи шăна-пăван пек сĕрлесе вĕçеççĕ пульăсем. Унта та кунта, персе пăрахнă ăсансем пек, йун йухтарса выртаççĕ дружинниксем.

Мирун кедр тăрринчен йалтлатса сиксе анчĕ те, тўрех пуп нўхрепĕ патне чупса пычĕ. Пăхаt,—алăкне çĕраççипе питĕрнĕ.

— Ентри, есĕ чĕрĕ-и?—кăшкăрчĕ Мирун, нӳхреп алăкне пăшал кучĕпе шаккаса.

Сивĕ нӳхрепре чĕрĕп пек хутланса, вилĕм кĕтсе ларакан Ентри Мирун сассине илтсен тем пекех савăнса кайрĕ.

— Чĕрĕ... Кăлар хăвăртрах. Шăнса вилетĕп,—сасă пачĕ вăл. Мирун çавăнтах, нӳхреп алăкне пăшал кучĕпе çапса çĕмĕрсе Ентрийе кăларчĕ. Ентрипе Мирун пĕрне-пĕри ыталаса чуптурĕç. Çав вăхăтра Ахмет хашăлтатса чупса çитрĕ те:

— Ентри, чĕрĕ-им есĕ? Ур-ра, пирĕн илет!—савăнăçлă кăшкăрса йарса, Ентрийе ыталаса чуптурĕ. Унтан вĕсем пуп çуртнеле кĕрсе кайрĕç.

Пăшал сасси лăпланчĕ. Партизансем дружинниксене çавăрса илчĕç. Чĕрĕ йулнисене пурне те чиркӳ картине пуçтарса хурал тăратрĕç.

Шурăмпуç шуралса килчĕ, ирхи автансем авăта пуçларĕç. Хĕрарăмсем васкаса кăмакисене хута-хута йачĕç. Йал çине аш-какай, çу, икерчĕ тата темле тутлă шăршăсем сарăлчĕç.

## *ВИÇÇĔМĔШ СЫПĂК.*

### I.

Ерешмен карти пек урлă та пирлĕ каркаланнă, çилпе те, çилсĕр чух та выçă кашкăр пек уласа тăракан телеграф пралукĕсем тăрăх кунĕн-çĕрĕн çапла çырнă телеграммăсем килеççĕ:

„Ваше высокопревосходитĕлствă.

Бољшевиксем хĕснĕ çемĕн хĕстереççĕ. Фронта чарма вăй çук. Салтаксем рочĕ-рочĕпе полки-полкипе хĕрлисен йенне каçаççĕ. Мĕнле майсемпе чармала кăтартса парăр“.

Кун пек телеграммăсем хĕвеланăç йенчен килеççĕ. Хĕвел тухăçĕнчен урăхла:

„Ваше высокопревосходитĕлствă.

Пĕтĕм тайга вăрманĕ тулли партизан отрйачĕсем тăраççĕ. Чарма вăй çук. Кашни кун ӳсеççĕ: хуласенчен, йалсенчен, хапрăк-савăтсенчен, шахтăсенчен çĕршерĕн, пиншерĕн çав отрйадсене пыра-пыра хутшăнаççĕ. Вĕсен пулеметсем те тупă-

сем те пур. Пирĕн отрйадсен кĕрешме вăй ҫитмест. Декабĕрĕн ҫирĕмпилĕкĕмĕшĕнче партизан-Лубков отрйачĕ пирĕн полковник Сырăвăн дружинниксенчен пуҫтараннă отрйадне пĕтĕмĕшпех ҫĕмĕрсе тăкнă. Сырăва хăйне вĕлернĕ. Мĕнле майпа ҫав ҫĕтĕк-ҫурăксене чармала, – кăтартса пар".

Ҫĕпĕрĕн шăп вăта ҫĕрĕнче, Омск хулинче, пĕтĕм Ҫĕпĕре ҫавăрса илсе, ĕҫлекенсемпе хресченсене йунпа пĕвентернĕ «Ҫĕпĕр патши»—Колчак, ҫав ҫӳлте кăтартнă телеграммăсене вулать. Кашни телеграммине вуланă хыҫҫăн, ҫунакан чĕрине лăплантарасшăн вăл бокал тулли шампански ерех тултара-тултара ĕҫет. Ĕҫнĕ хыҫҫăн, сĕтел хушшине ларса, ҫакăн пек телеграммăсем ҫырать:

„Хĕвеланăҫĕнчи ҫарсен главнокомандуйушчине.

Фронта чарма мĕнле майсем пур,—ҫапла чарма тăрăш. Пулăшу йаратăп. Адмирал Колчак"

Кун пек телеграммăсем хĕвеланăҫнеле кайаҫҫĕ. Хĕвелтухăҫнеле урăхла:

„Анненкăв атамана

Партизансене хирĕҫ хăвăн отрйадупа тух. Ан шелле. Хăратма нумайрах персе вĕлер. Сырăв полковник отрйадне ҫĕмĕрнĕ бандит Лубкова чĕрĕле тытса илме тăрăш. Уншăн чи паха ордĕн илĕн. Адмирал Колчак".

Чăнах та, Колчак ҫарне тĕрлĕ йенчен хĕстереҫҫĕ. Вăл, вутлă ункă варринче пек, каллĕ-маллĕ ҫаврăнкаласа ҫеҫ тăрать. Хĕвеланăҫĕнчен Хĕрлĕ ҫар ҫĕмĕрсе килет. Вăл Урал тăвĕсем урлă каҫса, Чељабинск хулине ҫитнĕ. Шуррисем, хыҫалала ҫаврăнса пăхмасăр, кунне 70-шер, 80-шар ҫухрăм тараҫҫĕ. Хĕвелтухăҫ йенчен партизан отрйачĕсем хĕстереҫҫĕ. Мариински уйесĕнче—Лубков отрйачĕ ҫĕмĕрет, Кузнецк уйесĕнче Рогăв силлет, Минуҫинск уйесĕнче—Шчетинкин чĕтретет, Барнаул таврашĕнче—Мамăнтăв отрйачĕ ватать. Ҫак отрйадсем чи пысăк, чи вăйлă партизан отрйачĕсем. Вĕсен пулеметсем те тупăсем те пур. Кашни отрйадра пин ҫынтан кайа мар. Вĕсене пурне те большевиксем йертсе пыраҫҫĕ. Кусемсĕр пуҫне тата ҫĕршер, икшер ҫĕршер, пилĕкшер

çĕршер çынлă отрядсем те тем чухлех. Пурте вĕсем Колчак çарне хирĕç тăрса арăслансем пек, вилĕмрен хăрамасăр, Çĕпĕр сиввине пăхăнмасăр çапăçаççĕ.

Чугун çул тăрăх хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнеле, çĕрĕн-кунĕн пойĕсĕ-пойĕсĕпе тиенсе, буржуйсем ирте пуçларĕç. Вĕсене хирĕç фронтала таварлă пойăссем, çар ешелонĕсем ирте-ирте каçайаççĕ. Ешелонсен пуçĕнчи çутă вакунсем ăшĕнче офицерсем хăйсен урмăшнă сассисемпе йурă йурлаççĕ:

Ах, шарабан мой, шарабан,
А я мальчишка шарлатан...

— Вырăс çарĕн офицерĕсем сывă пулччăр!—кăшкăкăраççĕ буржуйсем çĕлĕкĕсене çӳлеле ывăтса. Буфетсенче те вырăс офицерĕсен сывлăхĕсемшĕн тулли-тулли бокалсемпе хаклă ерехсем тултара-тултара ĕçеççĕ.

Ĕлĕк хулесенче пурнакан чех салтакĕсем пурте станцăсене куçнă. Кашни станцăра тенĕ пек пĕрер, йе икшер пойăс чех салтакĕсем вакунсенче тăраççĕ. Хăш йенчен те пулсан кăшт çеç хĕстерсенех, халех тарма хатĕр паровозсем кунĕн-çĕрĕн тĕтĕм кăларса, пар тытса тăраççĕ.

Кашни станцăра тенĕ пек чех салтакĕсем валљи, вырăс салтакĕсенчен уйрăм, столовăйсем уçса панă. Мĕнле кăна апат-çимĕçсем пĕçермеççĕ-ши кунта? «Кăвакарчăн сĕчĕ анчах çук»—тесе калаçаççĕ салтаксем вăл столовăйсен йеннеле пăхса. Пусма мăнтăрлатакан сыснасем пек çитереççĕ вĕсенче чех салтакĕсене. Çавăнпа та чехсем тавра майрасем туллийех. Вĕсем вилĕ тавра çăхансем йавăннă пек йавăнаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем арлă-арăмлă пекех пурнаççĕ. «Мăнтăр йытă хӳрипе вăйлă» теççĕ. Çавăн пекех чех салтакĕсем те, ĕççĕр аптранă йенне, хăйсене-хăйсем йăпатасшăн майрасене пĕр-пĕринпе улăштарса мăкаричсем ĕçеççĕ. Илемлĕреххисемшĕн хушса параççĕ. Майрисем те вĕренсе çитнĕ: ерех-сăрана шыв ĕçнĕ пек ĕçеççĕ. Чех салтакĕсен чĕркуççийĕсем çийĕсене улăха-улăха лараççĕ те:

— Чунăм, Мускава час кайăпăр-и?—тесе ыталаса чуптăваççĕ.

Лешсем:

— Час, час. Ех, унта вара кунти пек мар пурнăттăмăр!—теççĕ.

Чех салтакĕсен те, вĕсемпе пурăнакан майрасен те, вырăс офицерĕсен те—пурин те пуçĕсенче пĕр шухăш, чĕлхисем çинче пĕр сăмах:

«Мускав. Хăçан Мускавра пулăпăр-ши? Ех, унта вара Çĕпĕрти пек мар пурнăттăмăр»,—хăйсене-хăйсем пĕчĕк ачасем пек йăпатаççĕ. Мускава вĕсем, тен, тĕлĕкĕсенче те кураççĕ пуљ. Мускавшăн пысăк бокалсене тулли тултарса, хире-хирĕç шаккаса, урра кăшкăрса шампански ерехсем ĕçеççĕ. Анчах Мускав Çĕпĕртен айакра—кăшкăрсан та илтĕнмест, пăхсан та курăнмасť... Унта Ленин çарĕ. Вăл хытă сыхланаť...

## II.

Анненкăв атаман отрйачĕ Мариинск станцине пырасса станцă начаљникĕ тата ĕçлекенсем ик-виç кун малтанах пĕлнĕ. Ун çинчен таврари йалсене те систернĕ.

Хĕрлĕ картуслă, пĕчĕкрех сухаллă хĕрĕхрен иртнĕ станцă начаљникĕ виççĕмĕш каç ĕнтĕ, пĕр куç хупмасăр, атаман çитессе кĕтет. Ларсан-ларсан, телефон трубкине хăлхи çумне тытса:

— Алло!—алло!.. Килет-и?.. Килет-и? —тесе йунашар станцăран ыйтаť.

— Çук-ха, çук... Кĕтетпĕр,—тавăраççĕ телефон пралукĕн тепĕр вĕçĕнчен.

Атаман Мариински станцине килессе пĕлсен, станцă çывăхĕнчи хресченсем хăраса лашисене, ĕнисене кĕтĕвĕкĕтĕвĕпе тайгана хуса кайа пуçларĕç. Вĕсем лайăх пĕлеççĕ: Анненкăв отрйачĕ йала çитсе лексен, йе лашасăр, йе ĕнесĕр тăрса йулас пулаť.

Чукун çул çинче ĕçлекенсем çилĕлĕ, вĕсем пуçĕсене чиксе çÿреççĕ, Анненкăв пойăсĕ килес йенеле шурă куçĕсемпе çаврăна-çаврăна пăхаççĕ.

Анненкăв килессе Лубков та, унăн отрйадĕнчи партизансем те пĕлеççĕ. Анчах Лубков отрйачĕ Анненкăв отрйадĕнчен хăрамасť. Вăл хуť те хăçан та унпа ça-

пăçма хатĕр. Ун вăй çитет. Ик ерне хушши ĕнтĕ вĕсем ку йалта канаççĕ. Хăйсем те лашисем те тутă. Халĕ вĕсене никам та кансĕрлемест. Хăйсем хӳça. Хресченсем савăннипе, ним тума пĕлмесĕр, партизансене хăнаран-хăнана илсе çӳреççĕ.

Пуп çуртĕнче Лубков отрйачĕн штабĕ тăрат. Унта Лубков хăйĕн тĕп шанчăклă йулташĕсене: Мируна, Ахмета тата пилĕк-улт партизана чĕнсе илчĕ те, вĕсемпе Анненкăв отрйадне мĕнле майпа хирĕç тухса илессе сăмах пĕтерчĕ.

— Çапла, йулташсем. Адмирал Колчак хăйĕн чи шанчăклă йыттине—атаман Анненкăва, мана чĕрĕле тытса, хăй патне тăратма хушса телеграммă панă. Çавăнпа атаман хăйĕн отрйачĕпе пирĕн çийе килет. Кĕçĕр сакăр сехет те вăтăр минутра Мариински станцинче пулмала. Ун çинчен станцă начаљникне систерес пулат.

Ахмет Лубкова каласа пĕтерме памарĕ, ахăлтатса кулса йачĕ.

Лубков, калама чарăнса, Ахмет çине шурă куçĕпе çаврăнса пăхрĕ, анчах нимĕн те чĕнмерĕ. Ним тăвайман йенне, вăл сылтăм аллипе наганне йарса тытрĕ. Ытти партизансем те, Ахмет мĕншĕн кулнине ăнласа илеймесĕр, çиленсе, тĕлĕнсе, пĕрре каçса кайса кулакан Ахмет çине, пĕрре çилĕлĕ Лубков çине пăхса ларчĕç.

— Мĕн ухмаха йернĕ пек кулатăн?—тесе вăрçса тăкрĕ Мирун.

— Ну—кулмасăр, ăçтан тӳсес. Мĕнле ăсĕ çитнĕ-ха вăл Колчакăн пирĕн Лубков йулташа чĕрĕле тытса илме. Ха-ха-ха!—каллех ахăлтатса кулса йачĕ Ахмет.

Партизансем тин ăнланса илчĕç Ахмет мĕншĕн кулнине. Унпа пĕрле хăйсем те кулса йачĕç. Лубков та тутисене йăл култарчĕ.

— Йе, çитĕ, йулташсем, чарăнăр шăл йĕрме. Унта курăпăр кам кама чĕрĕле тытса илнине.

Партизансем шăп пулчĕç. Каллех Лубков сăмахĕсене итлеме хăлхисене тăратрĕç.

— Анчах, йулташсем, атаман Анненкăв отрйачĕ Сырăв отрйачĕ пек çеç мар—вăйлăрах; ун отрйадĕнче йалтан пуçтарăннă дружинниксем мар,—мĕн çамрăкранах

вырçа ёçне вĕреннĕ ватă казаксем. Çавăнпа та вĕсемпе питĕ пĕлсе çапăçас пулать. Кăшт çеç йăнăшсанах, вĕсем пире çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Вĕсен лашисем те пирĕнни пек хресчен лашисем мар—вĕреннĕ лашасем. Анчах тăшман вăйлă пулсан та, унран хăраса тăрас пулмасть. Йулашки патрон йулмиччен çине кĕрĕпĕр. Пирĕн ăна кунта йала килессе кĕтсе ларас пулмасть. Станцăна кайса хирĕç кĕтсе илес пулать. Анненкăв отрйачĕ йалсене кĕрсен хресченсене нумай сăтăр туса хăварма пултарать.

— Çук, йалсене кӳртместпĕр.

— Станцăна, хирĕç кайатпăр,—харăс кăшкăрса йачĕç партизансем.

— Ахмет йулташ, есĕ станцăна халех кай. Отрйад тĕттĕм пулнă çĕре çитĕ унта. Анчах есĕ станцăри ĕçлекенсене систер. Кĕçĕр унта вăйлă тытăçу пулĕ. Отрйад пырасси çинчен станцă начальникне те куç хĕс. Унран ан хăра. Вăл хамăр çын,—терĕ Лубков Ахмет çине пăхса.

Урăх калаçса тăрасси пулмарĕ. Ахмет çавăнтах наганне хулпуççи урлă çакса, хăйĕн çĕтĕк-çурăк, тутарла çĕленĕ пишметне тăхăнчĕ те, çĕлĕкне пусарах лартса, йулташĕсене алă парса тухса кайрĕ. Партизансем ăна куçĕсемпе ăсатса пăхса йулчĕç.

Çавăнтах Мирун чиркӳ тăрне улăхса карĕ те, кĕлĕрен тухнă вăхăтри пек, чансене тĕрлĕ саспа калаçтара пуçларĕ.

Пилĕк минут хушшинче партизансем чиркӳ патне пуçтарăнчĕç.

— Малала, ман хыçран,—кăшкăрчĕ Лубков утланнă лашине урисемпе хĕстерсе. Лубков хыççăн партизансем арман пĕви татса кайнă пек кĕрлерĕç.

## III.

Мариински станци пилĕк-улт çухрăмра çап-çут çуталса ларать. Кăвак пĕлĕт çине йун пек хĕрлĕ шевле ӳкнĕ.

Станцă çурчĕ пысăк. Ăшĕнче туллийех пăсажирсем пойăс килессе кĕтеççĕ. Кассăра билет сутмаççĕ пулин

те, ун умĕнче хĕрĕх-аллă çын умлăн-хыçлăн черет тăраççĕ. Черетре тăманнисем хăшĕсем лараççĕ, хăшĕсем багажĕсем çине пуçĕсене хурса выртаççĕ. Теприсем тата пĕр-пĕринпе калаçса, станцă тăрăх калле-малле уткаласа çӳреççĕ. Урайĕнчен пуçласа маччана çитичченех табак тĕтĕмĕ симĕсĕн-кăвакăн йавăнать. Станцă ăшĕ таса мар. Пылчăк, йăвăр сывлăш.

Кăвак шинеллĕ, урлă мăйăхлă, хулпуççи урлă хĕç çакнă пĕр полицейски перрон йенчи алăкран пырса кĕчĕ те, ункун пăхкаласа илчĕ. Унтан вăл выртакан пăсажирсене урисемпе тапса тăратса çӳре пуçларĕ:

— Ей, мĕн сысна пек йăванса выртатăр Тăрăр. Станцăра çывăрма йурамасть. Штраф пилĕк тенкĕ.

Хăшпĕр пăсажирсем ăйăх тĕлĕшпе сиксе тăрса лараççĕ те, ним иккенне пĕлмесĕр:

— Виновет, господин полицейски. Епĕ çывăрмастăп, ахаљ çеç выртатăп,—мăкăртатса илеççĕ.

Çавăнтах тата хăшĕ-пĕрисем:

— Господин полицейски, пуйăс хăçан килет,—тесе ыйтаççĕ.

— Епĕ станцă начаљникĕ мар пуйăс килессе пĕлме. Ав, расписани çине пăхăр. Унта паллă хăçан килмели,— тесе, çтена çумĕнче çакăнса тăракан тĕрлĕ цифăрлă сарлака хăма çине пӳрнепе чăсса кăтартать.

Станцă начаљникĕ перрон çинеле васкаса тухса кайрĕ. Ун хыçĕнчен:—Килет... килет... тенĕ сасăсем йанраса кайрĕç.

Пăсажирсем сике-сике тăчĕç. Унтала та кунтала та чупкала пуçларĕç.

— Мĕн килет?

— Пойăс килет-и?

— Мĕншĕн билет сутмаççĕ?—пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ пăсажирсем.

Пĕр вăхăта станцă ăшĕ çиллĕ кун çырма çинче хум çапнă пек каллĕ-маллĕ чӳхенсе тăчĕ. Çав вăхăтра сасартăк хыçалти алăкран пĕр çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ, мĕскĕн çĕлĕклĕ çын пырса кĕчĕ те, сĕтел çине улăхса кайрĕ.

— Йулташсем!—тесе чĕтретсе кăшкăрса йачĕ вăл пăсажирсен йенне пăхса.

Станцă ăшĕнчи пăтă пек пăтранакан халăх пĕр вăхăта шăп пулчĕ. Пурте куçĕсене çĕтĕк-çурăк çын çине тĕллерĕç. Тĕллемесĕр, мĕн чул вăхăт ĕнтĕ «йулташсем» тенĕ сăмаха илтменни. Çак «йултш» тенĕ сăмахшăн мĕн чухлĕ çынсене йе шомпăлпа, йе саламатпа çапаççĕ, йе тĕрмене хупса лартаççĕ, йе леш тĕнчене ăсатаççĕ. Ку çĕтĕк-çурăк вăл хăрушăсенчен хăрамасть пулас, полицейски умĕнчех «йулташсем» тесе кăшкăрать. Тата ахаљ те мар, сĕтел çине улăхса тăрса.

— Станцăра ĕçлекенсемпе пăсажирсем, атаман Анненкăв хăйĕн отрйачĕпе Лубков партизан отрйадне çĕнтерме килет. Мариински станцинче кĕçĕр вăйлă тытăçу пулать. Çавăнпа камăн вилес килмест, вăхăтлăха станцăран тухса кайăр,—тесе пĕлтерчĕ.

Халăх айĕн-çийĕн пăтранма пуçларĕ, кăшкăрашу, йĕрӳ, ылхану пуçланса кайрĕ. Пурте багажĕсене йатса алăк патне чупаççĕ. Ӳкеççĕ, йăваланаççĕ, пĕрне-пĕри таптаççĕ.

Полицейски çĕтĕк-çурăк çын патне выçă кашкăр пек йатлаçса чупса пычĕ те, хĕçне туртса кăларса:

— Бандит. Есĕ мĕншĕн çынсене хăратса çӳретĕн. Арĕслетĕп. Аťа ман хыçран —тесе кăшкăрчĕ.

Çĕтĕк çын полицейскийе ури тупанĕнчен пуçласа, пуç тӳпине çитиччен шăтарас пек пăхрĕ те, нимĕн чĕнмесĕр чăмăрне хыçала сулса, пĕтĕм вăйĕпелен сулăмлăн сăмси урлă шартлаттарчĕ. Полицейски аллинчи хĕç таçта çитиччен сирпĕнсе кайса, цемĕнтран хывнă урайне шалтăртатса ӳкрĕ. Полицейскийĕ хăй, пуçĕ çаврăнакан сурăх пек пĕр вырăнта çаврăнса тăчĕ-тăчĕ те, çтенана пуçĕпелен пырса çапăнчĕ.

Çĕтĕк-çурăк çын виççĕмĕш хут:

— Йулташсем, сыхланăр. Час атаман Анненкăвăн пойăсĕ çитет, тесе кăшкăрчĕ те, сĕтел çинчен йантлатса сиксе анса, çавăнтах станцăран тухса кайса курăнми пулчĕ.

Инçетре паровоз сасси илтĕнчĕ.

Станцă начаљникĕ пуçĕнчи хĕрлĕ картусне тӳрлетсе тăхăнчĕ те, майĕпен утса, йалан пойăса хирĕç тухса илекен вырăна кайса тăчĕ.

Пойăс станцăна çитрĕ. Малти вакун çинчен атаман Анненкăв тухрĕ. Ун хыçĕнчен çара йанахлă адйутант

анчĕ. Анненкăв тăрăхла питлĕ. Кăшт кăвакара пуҫланă качака сухаллă, куҫлăхпа, ҫийĕнче акăлчан пуставĕнчен ҫĕленĕ шинел; кăкăрĕ ҫинче ылттăн хĕрессем, тата тĕрлĕ медаљсем йăлтăртатса тăраҫҫĕ; пуҫĕнче кăвак путек тирĕнчен ҫĕленĕ ҫĕлĕк, хулпуҫҫи урлă хĕрлĕ сăран сумкă, айккинче наган ҫакăнса тăрат.

Вунă минут хушшинче казаксем лашисене вакунсем ҫинчен антарса, йуланутланма тытăнчĕҫ.

— Отрйад малала!—кăшкăрчĕ Анненкăв. Унпа пĕрлех инҫе те мар тепĕр сасă йанраса кайрĕ:

— Отрйад, пли!

Унччен те пулмарĕ, хулăн сасăлă хур аҫи пек, пулемет калаҫа пуҫларĕ. Пулеметпа пĕрле пăшал сассисем те кĕрлесе кайрĕҫ. Пуљăсем шăхăрса, вакунсене ҫите-ҫите ҫапăнаҫҫĕ.

— Партизансем!..

— Каллех вакунсене кĕрĕр!—йанраса кайрĕ сасă.

Пăшал сассисем пушшех кĕрлеме пуҫларĕҫ. Казаксем лашисем ҫинчен сике-сике анса, вакунсене кĕрсе шĕн васкаҫҫĕ. Хăшĕсем ҫавăнтах чăсăла-чăсăла ӳкеҫҫĕ, лашисем те чикĕне-чикĕне анаҫҫĕ. Тĕрлĕ йăнăшнă сасă илтĕне пуҫларĕ.

— Кайала!—йанраса кайрĕ сасă.

Паровоз хурлăхлăн ҫухăрса, майĕпен, вакунсене хыҫалала тĕкме пуҫларĕ. Пойăс ҫинчен те пăшал-пулемет сассисем йанрарĕҫ.

Пĕр вăхăта таврари ҫĕр такана ҫинчи шыв пек чӳхенсе тăчĕ. Ҫĕрлехи сивĕ сывлăша тар тĕтĕмĕ шăрши хупласа хучĕ.

— Полный ход!

Паровоз хăвăртран-хăвăрт: тăки-так, тăки-так тутарса, станцăран тухса кайса, курăнми пулчĕ. Пулемет-пăшал сассисем лăпланчĕҫ. Анчах йăвăррăн ахлатса сывланисем лăпланмарĕҫ, вĕсем чылайччен йанраса тăчĕҫ.

Кашни каҫ Мариинск станци урлă хĕвеланăҫĕнчен те, хĕвелтухăҫĕнчен те пилĕкшер-ултшар пойăс иртекенччĕ. Вĕсене хĕрлĕ картуслă, качака сухаллă станцă начаљникĕ хирĕҫ тухса илсе, ăсатса йараканччĕ. Вăл каҫ станцă урлă пĕр пойăс та иртмерĕ. Станцă начаљникĕ

те перрон ҫине тухмарӗ. Станцăра ҫӗр каҫипе те ҫын чунӗ пулмарӗ. Станцă йӗри-тавра йӗнерлӗ лашасем ҫеҫ ҫăварлăхӗсене чăмласа, ниҫта кайма пӗлмесӗр, калле-малле ҫӳресе ҫӗр каҫрӗҫ.

## *ТВАТТĂМӖШ СЫПĂК.*

### I.

«Ҫӗпӗр патши» Колчак ирхи апат ҫисе ларать. Унăн адйутанчӗ, ҫара йанахлă офицер, телеграммă илсе пычӗ:

— Срочнăй телеграммă, ваше высокопревосходителствă.

Колчак, адйутант ҫине пăхмасăр, хулпуҫҫи урлă кармашса, телеграммăна илчӗ те вулама тытăнчӗ. Вуланă май вăл ларнă ҫӗртех сивӗ тытнă пек чӗтресе кайрӗ, унтан ури ҫине сиксе тăчӗ те каллӗ-маллӗ уткалама тытăнчӗ:

— Ех, сволăчсем!—хăй тӗллӗн вăрҫса илчӗ вăл. Унтан, хăй куҫӗсене хăй ӗненмесӗр, телеграммăна тепӗр хут вуласа тухрӗ те каллех адйутантне тыттарчӗ.

— Ме, штаб начаљникне пӗлтер ку ӗҫ ҫинчен.

— Итлетӗп, ваше высокопревосходителствă,—терӗ те адйутант, атă кӗлли ҫинче вăрт ҫаврăнса, алăкран тухса кайрӗ.

Телеграммă ҫинче ҫапла ҫырнă пулнă:

> **Мариинск станци начальникӗ бољшевик пулнă.** Ман отрйад пырасси **ҫинчен малтанах пӗлсе, бандит** Лубкова систернӗ. **Вӗсем епӗ станцăна ҫитнӗ ҫӗре хатӗрленсе тăнă.** 25-мӗш числара, **каҫхине,** 8 сехет **ҫурăра, Лубков отрйачӗ** ман **отрйада пӗтӗмпех ҫӗмӗрсе тăкрӗ. Пилӗкҫӗр казакран пурӗ аллă** ҫын **тăрса** йулчӗ Хама суран атрӗҫ. **Гоҫпителте вырта**тăп.
>
> Атаман Анненкăв.

### II.

Йениҫҫей шывӗ йенчен, ҫӗҫӗпе каснă пек, сивӗ ҫил вӗрет. Ҫӗр ҫумӗнчен йăшăртатса йур вӗҫет. Чукун ҫул хӗрринчи телеграф йуписем хăйсем тӗллӗн вӗҫă кашкăрсем пек уласа лараҫҫӗ.

К-ск хулипе станцă хушши пӗр ҫухрăм. Ҫав хушăра пӗр чарăнмасăр автомобилсем калле-малле чупаҫҫӗ. Вӗ-

сем станцăна тийевпе кайаççĕ; кайала пушăла вĕçтерсе килеççĕ. Çав автомобилсемпе пĕрле тата лашалă лавсем те татти-сыпписĕр çӳреççĕ. Вĕсем пурте буржуйсен йапалисене хуларан станцăна турттараççĕ. Çавăнпа хула сарлака урамĕсем, тăвăр пралукĕсем кĕрлесе çеç тăраççĕ. Çĕмĕрĕлет хула хушши...

Буржуйсемшĕн пысăк хуйхă: пĕр йенчен Хĕрлĕ çар, тепĕр йенчен партизан отрйачĕсем хĕстернипе вĕсем хулана пăрахса хĕвелтухăçнеле тарма хатĕрленеççĕ. Çавăнпа мулĕсене станцăна ăсатаççĕ. Ĕçхалăхĕн савăнăç. Вĕсем буржуйсем хуларан тухса кайсан хăйсем хуçа пулса йуласса кĕтеççĕ. Çавăнпа та урамсем, пралуксем çĕрĕн-кунĕн лăпланмаççĕ, халăх каллĕ-маллĕ кĕрлесе çеç тăрать.

Станцăра та, перрон çинче те туллийех халăх. Унта кăшкăрашу, ылхану, йĕрӳ, çавăнтах тата йурлакансем те, ахăлтатса кулакансем те пур:

— Ха-ха-ха. Шăтăкĕсем пит тăварланса çитрĕç пулас.

Çавăнтах тата хăшпĕрисем хăйсен ленчешке арăмĕсене йăпатса лăплантарма хăтланаççĕ:

— Ан йĕр, чунăм, ан йĕр... Епĕр вĕт унта ĕмĕрлĕхе каймастпăр. Ак, Иркутска çитсе пĕр-ик ерне пурнăпăр та, болђшевиксене çĕнтерсен, каллех хамăр хулана пурăнма таврăнăпăр. Вара каллех пĕр-пĕрне йуратса, савăнса пурнăпăр. Ан йĕр...

— Господасем, ытла ан кăшкăрашăр-ха. Майĕпентерех. Кайса ĕлкĕрĕпĕр-ха. Хĕрлисем айакра вĕт-ха.

— Хĕрлисем айакра та, партизан отрйачĕсем çывăх.

— Антихриссем, çавсем пирки çак нушана куратпăр.

Станцă айĕн-çийĕн çаврăнать. Шавлать, кĕрлет.

Çур сехет урлă, хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнеле пойăссем пĕрин хыççăн тепри кĕрлесе иртме пуçларĕç. Пойăс станцă патне çывхара пуçласан, станцăри çынсем пурте тенĕ пек йапалисене йăтса, пĕрне-пĕри таптатапта, ӳке-ӳке, ларса кайас ĕмĕтпе пойăса хирĕç чупаççĕ, кăшкăрашаççĕ, çуйăхаççĕ.

— Ей, ăçта чупатăр? Ку пойăс сире ваљљи мар, военнăйсем ваљљи!—кăшкăрать хĕрлĕ картуслă станцă начаљникĕ.

Пăсажирсем, йапалисене йăтса каллех станцăна кĕреççĕ; станцă начаљникне, бољшевиксене, партизансене çĕрти-çӳлтине хăвармасăр ылханаççĕ. Колчак правитĕлствине сура-сура вăрçаççĕ.

— Ан васка. Кайма ĕлкĕрĕпĕр-ха. Хĕрлисем айакра. Ку пойăс военнăйсем ваљљи. Пире урăх пойăс парĕç,— лăплантарат̆ арăмне качака сухаллă, пĕтĕ арăм пек каçăр хырăмлă тилĕ кĕрĕк тăхăннă, лутра арçын.

— Кĕтсе лар. Парĕç...

— Ха-ха-ха-ха! ахăлтатса кулат̆ ăна хирĕç пĕр сасă.

— Мĕншĕн-ха малтан войеннăйсем кайаççĕ. Вĕсен малтан мар, кайа йулмала. Малтан пире ăсатмала,— ыйтат̆ пусĕнчи шĕлепки çине павлин хӳри тĕкне тăрăнтарнă майра.

— Пирĕн тăшман кайра çеç мар, малта та пур. Вырăн-вырăнăн партизан отрйачĕсем станцăсене çавăрса илнĕ тесе калаçаççĕ. Войеннăйсем çав тăшмансенчен чукун çула тасатма малтан кайаççĕ,—ăнлантарат̆ ăна усăнчăк хырăмлă арçын.

— Е-е-е, ăнлантăм ĕнтĕ,—килĕшет лешĕнпе шĕлепкелĕ майра.

Сасартăк станцăна пĕрер çĕклем хаçат йăтнă, çĕтĕкçатăк тумтирсем тăхăннă икĕ çамрăк арçын ачасем пырса кĕчĕç. Алăкран кĕнĕ-кĕменех пĕри пырĕ тĕпне хыртарса кăшкăра пуçларĕ:

— Ирхине кăларнăваскавлă номĕр. Питĕ интереслĕ. Хакĕ 10 тенкĕ. Мариинск станцине бандит Лубков отрйачĕ çавăрса илнĕ. Ăна хирĕç атаман Анненкăв хăйĕн отрйачĕпе тухса, станцăран хуса кăларса йанă. Тăватçĕр аллă бандитне вĕлернĕ. Лубковне хăйне суранлатнă. Йулашки отрйачĕ тайгана тарса хăтăлнă. Бандитсемпе хастарлă çапăçнă хыççăн атаман Анненкăв отрйачĕ канат̆. Ăна çав бандит Лубков отрйадне çĕнтернĕшĕн правитĕлстваă тăваттăмĕш хĕрес памала тунă...

Иккĕмĕш ача кăшкăрмаст̆. Вăл станцăра ларакансем патне пырат̆ те, айăплă çын пек унтала-кунтала пăхкаласа, шăппăн пăшăлтатат̆:

— Суйат̆ вăл ача. Унăн хаçачĕ çинче тĕрĕс çырман. Ак ман, хаçат çинче тĕрĕс. Ме, вуласа пăх. Ахалех

паратăп,—тесе хĕвĕнчен пĕчĕк çеç хаçат кăларса тыттарат̆ те, урăх йеннеле пăрăнса кайат̆. Унтан тепĕрин патне пырат̆:

— Ме, вула!—умне пăрахса хăварат̆.

Ак пилĕк минут хушшинче ачасем хаçачĕсене сутса пĕтерсе, станцăран тухса кайса курăнми пулчĕç.

Станцăри халăх пĕр вăхăта лăпланчĕ, пурте хаçат вулама пуçларĕç.

— Ак, ку аван. Пурте çак атаман Анненкăв пек çапăçсан халиччен епĕр тахçанах çав антихрис-большевиксене çĕнтермеле те, анчах... çук,—тесе пуçне пăркалат̆ усăнчăк хырăмлă арçын. Хăй çав хушăрах хаçачĕ урлă шĕлепкелĕ майра çине пăха-пăха илет.

— Чăн-ши вара ку? Епĕ хаçатсем çине çырнине ĕненми пулса çите пуçларăм ĕнтĕ, мĕншĕн тесен йалан: хĕрлисене çавăн чул тыткăна илнĕ, çавăн чул вĕлернĕ, çавăнта хуса çитернĕ,—тесе çыраççĕ. Чипертерех пăхсан—хĕрлисем йалан пирĕннисене малтан та хыçалтан та хĕсеççĕ. Пирĕннисем, хирĕç тăрас вырăнне, хыçалала çаврăнса пăхмасăр тараççĕ. Ех...—тарăнăн сывлат̆ шĕлепкелĕ майра.

— Пĕр сăмах та тĕрĕсси çук кунта.

— Пĕтĕмпе суйа.

— Суйа. Улталаççĕ,—тенĕ сасăсем илтĕне-илтĕне кайаççĕ.

## III.

Станцă каллех айĕн-çийĕн пăтрана пуçларĕ. Халăх амасăр хурт вĕлли пек сĕрлет: вăрçаççĕ, ылханаççĕ, кăшкăраççĕ, йĕреççĕ, йурлаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ...

Станцă умне чехсен бронепойăсĕ çитсе чарăнчĕ.

— Ак пирĕн сойузниксем, пăхăр.

— Фронтра большевиксемпе çапăçас вырăнне, хăйсем малтан тараççĕ.

— Вĕсем вĕт, большевиксемпе çапăçма мар, Раççейрен хăйсен çĕршывне тухса тарасшăн çеç вырăс çарне хăйсен ирĕкĕпе çыраннă.

— Ух, чейе те ĕнтĕ çав чехсем.

— Ха-ха-ха...



с. 23415.

Вырăссем вырăссемпе çапăçаççĕ.
Майрисем чехсемпе çӳреççĕ..
Ех, ну!
кăшкарса йулаТ пĕр сасă.

Вакунсен чӳречисем витĕр кăтралантарнă çӳçлĕ, сăрланă куç харшилĕ, хĕретнĕ туталă майрасем йăл кулса, станцăри халăх çине пăхаççĕ.

Çилĕлĕ куçĕсемпе пăхаТ вĕсем çине халăх.

— Упăшкисем фронтра болђшевиксемпе çапăçса йун тăкаççĕ пулђ. Вĕсем кунта чехсемпе савăнса çӳреççĕ,— вăрçаТ паçăрхи шĕлепкелĕ майра. Хăй çавăнтах: «Ах ман та çавсемпе ларса кайасчĕ. Вĕсемпе хăрушă мар»,— шухăшлаТ хăй ăшĕнче.

— Маруçă, ан хуйхăр. Ак пире ваљљи час уйрăм пойăс парĕç. Ме унчен чĕрене пусарма пĕрер черке ĕç,—хĕрлĕ ерех тултарса параТ усăнчăк хырăмлă арçын шĕлепкелĕ майрана.

— Кай, ан лапăртатса лар. Çуламан пăру. Санпа çак станцăра виличчен ларсан та ниçта тухса кайайас çук,—чышса йараТ леш упăшкине.

Усăнчăк хырăм нимĕн тума пĕлмесĕр, пуçне чиксе йапалисем çине кайса лараТ.

Майра пĕрре чехсен пуйăсĕ çине, пĕрре йуратман упăшки çине чалăшăн-чалăшăн пăхаТ:

— Есĕ пулмасан еп тахçанах Иркутскра пулмала. Сан пирки çакăнта пăчланса ларатăп.

Усăнчăк хырăм чĕнмесТ. Пĕрех качака сухалне аллипе ывăçла-ывăçла илсе, ĕне сунă пек шăлаТ.

Ак чехсен пуйăсĕ хускалса кайрĕ, станцăри халăх ăна куçпа пăхса ăсатса йачĕ. Мел пулсан, чехсене тĕртетĕрте антарса хăварса, хăйсем ларса кайĕччĕç те,— анчах нимĕн тума та çук. Халлĕхе вĕсем «хуçа», вĕсен аллинче хĕçпăшал.

Пойăс çемафор тĕлне çитрĕ. Сасартăк вакун алăкĕсенчен çарамас, çара пуç майрасем сирпĕне-сирпĕне тухса йулаççĕ. Пойăс хытăран-хытă кайаТ. Пойăсран тухса ӳкнĕ майрасем вакун çине калле ларасшăн аллисене çӳлеле çĕклесе—ла-ла-ла.. кăшкăрса, пойăс хыçĕнчен тăкăнса ӳксе чупаççĕ.

Станцăри халăх тĕлĕнсе кайса пăхса тăрат̆.

— Акă, куртăр-и,—пирĕн сойузниксем вырăс хĕрарăмĕсемпе мĕн тăваççĕ.

— Ха-ха-ха! Çав кирлĕ вĕсене.

— Кусем кивелнĕ ĕнтĕ, кирлĕ мар. Вĕсене малта, Иркутск майрисем кĕтеççĕ.

IV.

Станцă ăшĕнче те, тулашĕнче те тинĕс çинчи хум пек пăтранат̆ халăх. Станцă çурчĕн алăкĕсем йарах уçă выртаççĕ. Пĕрисем кĕреççĕ, теприсем тухаççĕ. Ăçта пăхнă унта чăптасемпе чăрканă, вĕренсемпе çыхнă арчасем, хутаççем йăванса выртаççĕ; çыннисем çав йапалисем урлă утса çӳреççĕ. Ватаççĕ, çĕмĕреççĕ. Пĕр-пĕрин йапалисене шеллемеççĕ.

Ак станцă алăкĕнчен кĕпе вĕççĕн, çара пуçăн, çӳлĕ кĕлелĕ пушмак тăхăннă, аллине тин çуралнă ача йăтнă, хăй пилĕк таран чĕп-чĕрĕ йун пĕр хĕрарăм пырса кĕчĕ. Аллинчи ачи сĕлĕх пек мăнтăр, алсыпписем, çиппе туртса çыхнă пек, пăвăнса тăраççĕ. Ачи амăшĕн куçĕсенчен пăхса, пĕчĕк алли-урисемпе тапкалат̆.

— Уа-уа-уа, кăшкăрат̆.

Амăшĕ, ачи кăшкăрнине пăхмасăр, халăх хушшинеле чышкаласа кĕрет.

Шĕлепкелĕ майра ачапа йулнă амăшĕ çине тĕлĕнсе пăхса ларат̆. Шеллерĕ пулас:

— Сивĕ вĕт, ачуна шăнтса пăсатăн, мĕншĕн чĕркеместĕн ăна.

Ача амăшĕ шăп чарăнчĕ те, шĕлепкелĕ майра çине çаврăнса пăхрĕ:

— Шеллетĕн-и? Апла пулсан ме, сана пултăр. Еп çуратнă. Ес пăхса ӳстер. Асту, вырăсран мар, чех офицерĕнчен пулнăскер,—тесе шĕлепкелĕ майра чĕрçи çине ачине лаплаттарса пăрахрĕ те, хăй çавăнтах васкаса халăх хушшине кĕрсе кайса курăнми пулчĕ.

Шĕлепкелĕ майра, пĕрре тĕлĕннипе, пĕрре хăранипе нимĕн тума пĕлмесĕр, çӳлеле пăхса, çăварне карса хайар сассăпа кăшкăрса йачĕ.

— Ача майра чĕрçи çинчен урайне персе анчĕ. Лаплатса ӳкнĕ май, вăл макăрма пуçларĕ.

Çав вăхăтра хай хаçат сутакан ачасем каллех пырса кĕчĕç те, халĕ иккĕш те хараc, пĕринчен пĕри ăмăртмала, кăшкăра пуçларĕç. Пĕри:

— Каçхинехи телеграммă. Питĕ интереслĕ. Хакĕ пилĕк тенкĕ. Партизан Лубков отрйачĕ Мариински станцине хăй аллине илнĕ. Станцă урлă пойăссене иртермест. Краснойарск станцине çавăрса илме хатĕрленет. Хĕрлĕ çар йулашки станцăна çитет.

— Иккĕмĕш: Колчак правитĕлстви Иркутск хулине тухса тарнă.

Халăх пушшех пăтрана пуçларĕ. Урайне ўкнĕ ача сасси илтĕнми пулчĕ.

## V.

Каç пулчĕ. Йалан хулара та, станцăра та електрицă лампиcем çунаканччĕ. Вăл каç çутăлмарĕç. Çавăнпа та хула та, станцă та тĕттĕм çĕр ăшĕнче путланса ларчĕç. Тĕттĕм, сивĕ сывлăш ăшĕнче хура мĕлкесем пăшăл-пăшăл калаçса, каллĕ-маллĕ чупкаласа çĕр каçрĕç.

— Мĕнле тухса кайас.

— Хĕвелтухăçнеле урăх пойăссем иртес çук ĕнтĕ.

— Лашапа кайас.

— Лашапа инçе, çитейес çук. Иркутска çитиччен пурĕ пĕрех йе партизансем, йе хĕрлисем хуса çитсе тытса илĕç.

— Манран ниçта та кайассипулмасть. Епĕ çакăнтах йулатăп. Апла та капла та пурĕпĕр. Большевиксем тискер кайăксемех мар-тăр-ха. Пурне те вĕлерсе пĕтермĕç.

— Мĕншĕн вĕлерччĕр вĕсем пире... Епĕр вĕсен вĕсене хирĕç хĕçпăшалпа тăмастпăр.

— Большевиксем çитни çав хатĕрех хăрушă мар. Анчах партизансен аллине лексен вара, чĕрĕ йуласса ан та шухăшла.

— Чăнах та вĕлерĕç-шим?

— Вĕлерĕç.

— У-у-ух, хăрушă. Çын илтмеле мар, вăрăсем пек пăшăл-пăшăл калаçрĕç çĕрле. Килĕрен-киле чупкаларĕç. Йапалисене пытарчĕç.

Станцăна турттарнă йапалисене çĕрĕпех каллех хутлана илсе кайрĕç. Станцă пуш-пушă тăрса йулчĕ. Пасажирсем тĕрлĕ йенне саланса пĕтрĕç. Анчах пилĕк таран чĕп-чĕрĕ йунпа пĕвеннĕ ача амăшĕ çеç хутман кăмака умне чĕрĕп пек хутланса ӳкнĕ те ерне ытла ĕнтĕ пĕр хускалмасăр, шăлне шат çыртса, куçне хупса выртать. Унтан инçе те мар, урайĕнче пĕчĕк ача аллисем, урисем пырши-пакартисем тирпейсĕр сарăлса выртаççĕ.—Йанк уçă выртакан алăкĕсем витĕр вăшăлтатса çил кĕрет. Пĕрре пăхсан, ку станцă ĕмĕр çын пулман пек туйанать, тепре пăхсан, амăшĕпе ачи ӳчĕсем çын пуррине пĕлтереççĕ.

Çав каçран вара станцă урлă пойĕссем иртми пулчĕç. Паровоз сассисем те илтĕнмерĕç. Анчах тепĕр кун ирхине, пойĕссем вырăнне, чукунçул тăрăх хĕвелтухăçнеле вĕççĕр-хĕрсĕр тийевлĕ лавсем ирте пуçларĕç.

Обозпа пĕрле шăннă кăркасем пек хутлана-хутлана кĕнĕ салтаксем, казаксем, офицерсем такăна-такăна, ӳкеӳке утаççĕ.

Обоз пырсан-пырсан пĕр тăп чарăнса тăрать; сехет, икĕ сехет, хăш чух ытларах та пĕр вырăнтан хускалса кайаймасăр тăрать.

— Ма чарăнтăр?

— Сволăчсем!

— Пошол малала!—шăлĕсене шатăртаттарса, пыртĕпĕсене хыртарса кăшкăрса иртеççĕ офицерсем. Пĕрре малала, пĕрре хыçалала каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ.

Çук, обоз офицерсем кăшкăрнине итлемест. Хăй хускалса кайиччен пĕр вырăнтах капланса тăрать. Салтаксем офицерсене итлеми пулса çитнĕ. Обоз чарăнсанах телеграф йуписене каса-каса вакласа, вут чĕртсе йараççĕ те ăшăнма пикенеççĕ. Салтаксем ăшăнса тăнине кура офицерсем пушшех усал йатăсем пек хăрăлтатса кăшкăрса, каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ. Чылай тăрсан-тăрсан обоз хускалса кайать. Тусем çине улăхать, варсем тĕпне анать. Ăçта кайать? Ăçта çул вĕçĕ? Ăçта çитсе чарăнмала? Ăна салтаксем те, казаксем те, офицерĕсем те пĕлмеççĕ. Йалан малала, лав хыçĕнчен такăна-такăна утаççĕ.

Уйӑхӗ-уйӑхӗпе хӑмӑт хывман пирки, лашисем ӑмрисем какайланса пӗтнӗ, вӗсенчен йун тумласа тӑрать. Ҫынсем ывӑннӑ лашисене пӑрахса хӑвараҫҫӗ. Ҫӗмӗрӗлнӗ ҫунисене вакласа вутра ҫунтараҫҫӗ. Ҫул тӑрӑшшӗпе, ӑҫта пӑхнӑ унта, лаша виллисем, ҫуна ҫӗмрӗкӗсем, хӑмӑт, йӗнерчӗк ванчӑкӗсем йӑванса выртаҫҫӗ. Йӗри-тавра ҫӑхансем, улакураксем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе йавӑнса ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем лаша виллисем ҫине ларса, урисемпе тапса, вилесене туртаҫҫӗ, куҫӗсене чава-чава кӑлараҫҫӗ. Ӑҫта пӑхнӑ унта вут куписем ҫунаҫҫӗ. Вӗсен тавра салтаксем, аллисене саркаласа, ӑшӑнса тӑраҫҫӗ.

Обоз майӗпен, чарӑна-чарӑна, малала туртӑнать. Салтаксем, вут ӑшшипе йӑпанса, йулнӑҫемӗн йулса пыраҫҫӗ. Офицерсем пӗрех:—Малала, сволӑчсем! Обозран ан йулӑр!—кӑшкӑрса, салтаксене хӑвалаҫҫӗ. Салтаксем, офицерсем кӑшкӑрнине илтмен пулса, вут умӗнче саркаланса хӗртӗнсе тӑраҫҫӗ.

— Мӗн чул кайсан та, ку ҫулӑн вӗҫне тухас ҫук. Антив, кайччӑр хӑйсем малала. Пире мӗн, йулсан та ним те пулас ҫук. Хӗрлисем кашкӑрсем мартӑр-ха. Хамӑр пек ҫынсемех,—тесе, пӗр-пӗрнипе пӑшӑл-пӑшӑл калаҫаҫҫӗ.

Обоз малалах туртӑнать. Салтаксем йулнӑҫемӗн йулаҫҫӗ. Нумай лавсем иртнипе ҫул ҫӗмӗрӗлсе, ланкашкаланса пӗтнӗ. Лавпа иртме мар, ҫуран утма та майӗ йулман.

## VI.

Иккӗмӗш тавлӑк ӗнтӗ К-ск станци тӑлӑххӑн курӑнса ларать. Кунтан пойӑссем иртме пӑрахнӑ. Ҫынсем те ҫӳремеҫҫӗ. Станцӑ начаљникӗ курӑнмасть. Вӑхӑтлӑха вӑл та таҫта тарса пытаннӑ.

Иккӗмӗш тавлӑк ӗнтӗ, кунӗн-ҫӗрӗн татти-сыпписӗр чукунҫул тӑрӑх шуррисен обозӗ иртет. Акӑ, сасартӑк шӑп станцӑ тӗлӗнче обоз чарӑнчӗ.

— Ма чарӑнтӑр?

— Аҭа малала!—хайаррӑн кӑшкӑрса иртсе кайрӗ пӗр офицер. Ҫав вӑхӑтрах станцӑна, майӗпен чашӑлтатса, хӗрлӗ йалав ҫакнӑ бронепойӗзд пырса кӗчӗ. Пырса кӗчӗ те пойӗзд ҫинчен пӑшал, пулемет, тупӑ сассисем йанраса кайрӗҫ.

— Тра-та-та-та!.. Ух-ух-ух!
— Партизансем!..
— Сыхланăр!..—сасăсем йанраса кайрĕç.

Вут йĕри-тавра ăшăнса тăракан салтаксем, аллисенчи пăшалĕсене айаккала ывăта-ывăта йарса, кĕпшек йур ăшне чăмма тытăнчĕç. Обоз айĕн-çийĕн цăтранса кайрĕ. Лашасем, пăшал сассинчен хăраса, хăшĕсем çул çинчен сиксе ўксе, йур ăшне пута-пута ларчĕç, хăшĕсем тăварăнса кайса, саланса пĕтрĕç. Обоз çурхи шыв пек хумханать, никам нимĕн йĕркине пĕлмест.

Офицерсем, партизансене парăнасшăн мар пулса, пойăс йеннеле нагансенчен переççĕ. Хăйсем пекех салтаксене те пеме хушаççĕ. Йур çинче выртаканскерсене вĕсем кăшкăра-кăшкăра пырса тапаççĕ.

— Сволăчсем!
— Мĕншĕн пытанса выртатăр?
— Тăрăр!
— Перĕр!

Анчах салтаксем хускалмаççĕ, вĕсем пуçĕсене тата та шаларах йур ăшне чикеççĕ.

Сасартăк пăшал-пулемет сасси тăпах чарăнчĕ. Пойăс çинчен пĕр сасă йанраса кайрĕ: «Йулташсем! Парăнăр! Офицерсене чарăр!»

Йур ăшĕнче выртакан салтаксем пĕр вăхăта вилнĕ пек хускалмасăр выртрĕç, унтан йур айĕнчен сике-сике тухса, пăшалĕсене йара-йара тытрĕç те, хăйсен офицерĕсене чике-чике пăрахма тытăнчĕç.

— Пĕтĕр, сволăчсем!..
— Пĕтĕр йун ĕçекенсем!..
— Тахçанах сире çапла кирлĕ пулнă...

Пилĕк минут хушшинче самана улшăнса тăчĕ. Халăх çеç салтаксене тапса, тем те пĕр каласа вăрçакан офицерсем, пусса пăрахнă автансем пек, хăшĕ вилĕ, хăшĕ вилеймесĕр йун йухтарса выртаççĕ.

Пойăс çинчен партизансем:

— Урра!—Совет влаçĕ сывă пултăр!—кăшкăрса йачĕç.

Салтаксем вĕсен йеннеле урра кăшкăрса чупрĕç.

Ирхи хĕвел хĕрелсе тухрĕ. Станцăра ĕлĕкхи пекех

çынсем каллĕ-маллĕ чупкала пуçларĕç. Хĕрлĕ картуслă станцă начальникĕ тупăнчĕ. Станцă тăрне хĕрлĕ йалав çакăнчĕ.

— Ну, йулташсем, революци пулчĕ. Халĕ ĕнтĕ хулари йулташсем—хуласене, хапрăк-савăтрисем—хапрăк-савăтсене, шахтăрисем—шахтăсене, йалтисем—йалсене салан-са, хĕрлĕ çар çитнĕ çĕре советсене суйласа хурăр. Со-ветсене кама суйламалине есĕр пĕлетĕр—унта пуйансене вырăн çук. Революци сывă пултăр. Урра!—кăшкăрчĕ Лубков, вакун алăкĕ умне тухса тăрса. Чылайччен кĕрлерĕ вăл кун станцă савăнăçлă сасăпа. Партизансем те, салтаксем те тахçанччен урра кăшкăрса тăчĕç. Пар-тизансем пĕр-пĕринпе, унтан салтаксемпе ыталана-ыта-лана чуптурĕç, кăмăллăн калаçрĕç. Вара алла-аллăн ты-тăнса, тĕрлĕ йеннеле саланчĕç. Нумайăшĕ вĕсенчен кал-лех бронепойăс çине тийенчĕç.

— Малала!—кăшкăрчĕ Лубков. Паровоз, вăйлăн ахăр-са, хĕвелтухăçнеле хускалса кайрĕ.

Шуррисен салтакĕсем çул тăрăх тĕрлĕ йеннеле салан-са пĕтрĕç.

Çапла партизан отрйачĕсем хула хыççăн—хула, стан-цă хыççăн—станцă йышăнса, малала—Иркутск йеннеле туртăнаççĕ. Пĕтĕм Çĕпĕрĕпех иккĕмĕш хут совет влаçĕ чĕрĕлет.

## *ПИЛЛĔКĔМĔШ СЫПĂК.*

### I.

Хĕл иртрĕ. Çанталăк ăшă йенне сулăнчĕ. Инçетрен шуса иртекен хĕвел çывăхала килчĕ. Вăрăм çĕрсем кĕс-келчĕç, кĕске кунсем вăрăмланчĕç. Шартлама сивĕсем те иртсе кайрĕç. Анчах тăмансем иртсе пĕтмен-ха, хутран-ситрен килкелесе вĕсем тӳлек çанталăка айĕн-çийĕн çавăрса иртсе кайаççĕ. Анчах халĕ вĕсем хăрушă мар, вĕсем ăшă тăмансем çеç.

Çурхĕлти шартлама сивĕсемпе пĕрле, шуррисен çарĕ те хĕвелтухăçнеле иртсе кайрĕ. Шуррисем, кĕтӳçне çу-хатнă пысăк кĕтӳ пек, тĕрлĕ йеннеле саланса станцăсем, хуласем урлă, пысăк та пĕчĕк çулсем тăрăх, хапрăк-савăтсем, шахтăсем, йалсем, утарсем урлă иртрĕç. Мĕн

чухлĕ сăтăр туса хăвармарĕç-ши вĕсем хăйсем ир..., çул çинче пурăнакан ĕçхалăхне? Ăна никам та хисеплесе кăларман та, кăларас та çук: куçĕсене мĕн курăннă, аллисене мĕн лекнĕ пурне те хăйсемпе пĕрле тийе-тийе тухса кайса, çулсем тăрăх акса хăварчĕç; хăйсемпе илсе кайайманнисене ватса-çĕмĕрсе, çунтара-çунтара йачĕç. Мĕн чул хресчене лашасăр, ĕнесĕр тăратса хăвармарĕç-ши? Мĕн чул ача-пăча тăлăха тăрса йулмарĕ-ши? Мĕн чул куççуҫ тăкăнчĕ?.. Вĕсен шучĕ çук. Вĕсем пурте—шуррисен тискерлĕхĕпе пулчĕç.

II.

Мирун арăмĕн Марйен пуçĕ тулли хуйхă. Вăл шуррисем иртсе пĕтсенех, хĕрлисем çитĕç те, вара упăшки те килне таврăнĕ, тесе кĕтнĕччĕ. Анчах шухăшлани пулмарĕ. Шуррисем иртсе кайни ерне çитет ĕнтĕ, хĕрлисем хаҫ те вĕсен йалне çитмеççĕ-ха. Хăçан çитесси те паллă мар. Упăшки таврăнман пирки, Марйе вĕлермен-ши?—тесе шухăшлать. Çук, апла пулсан ăçтан та пулин хыпар килĕччĕ. Икĕ çула йахăн вĕт Марйе Мирун ăçта çÿренине тĕплĕн пĕлсе пурăннă. Пĕрне-пĕри хирĕç пулса калаçнипе çеç мар, Мирун çинчен вăл ытти майсемпе те хыпарсем нумай илгме пултарнă. Акă хаҫ нумайах та пулмасть У-ск йалĕнче тарçăра пурăнакан йăмăкĕ, Наçтук, Мирун вĕсен йалĕнче пурăннине пĕлтернĕччĕ. Çавăнтан вара çеç хыпар çук.

Хĕрлисем вăрах çитменнипе йалти пуйансем ĕлĕкхи пекех хуçа пулса пурăнаççĕ. Хĕрлисем çинчен тĕрлĕ ырă мар хыпарсем сараççĕ.

— Ак, курăр-ха, хĕрлисем çитсен пурин çине те пысăк куланай хумала, тет. Вăхăтĕнче тÿлеймесен, çуртйĕрĕсене, выҫăх-чĕрлĕхĕсене сутаççĕ, тет. Хăйсене тĕрмене хупса лартаççĕ, тет. Пире мĕскер... Епĕр йăвăр пулсан та тÿлĕпĕр. Ак сире, чухăнсене,—хуйхă. Хăвăр пуçăра пуласса хĕрлисене кĕтсе илетĕр. Асăнăр та, кайран пулĕ. Чавса çывăх та, çыртма инçе пулĕ,—тесе чухăнсене хăратаççĕ.

Йалти пуп та çав пуйансем майлах йурлать:

— Хĕрлисем вĕсем антихристсем: çветуй тĕне хирĕç

раççĕ. Чиркӳсене пĕтереççĕ. Пире, турă çыннисене, çыхураймаççĕ.

Çак сăмахсене илтнипе чăнах та хăшпĕр чухăнсем хăрасах ӳкнĕ:

— Чăнах-шим вара ку?.. Апла пулсан мĕншĕн-ха ĕç-халăхĕ çав хĕрлисемшĕн йун тăкать,—тесе, хăш сывлаççĕ йăвăррăн.

— Ан ĕненĕр-ха çав пуйансемпе пуп сăмахĕсене. Ак Мирун таврăнтăр-ха. Вăл тĕплĕн ăнлантарса парĕ,—тесе лăплантарать Марйе çынсене. Ку пĕр хуйхă Марйен. Иккĕмĕш—шуррисем иртнĕ чух пĕртен-пĕр лашине кӳлсе кайрĕç. Йулашки качакине пусса çирĕç. Мĕн чул йăлăнчĕ Марйе, лашана илсен те, качакана хăварăр хуть, тесе. Çук, хăвармарĕç.

Çапла Марйе икĕ выљăхран пĕр выљăхсăр тăрса йулчĕ. Мирун таврăнсан мĕн калĕ-ши ĕнтĕ? Пурлă-çуклă выљăхна та сыхлайман. Тайгана пытармалаччĕ. Ех, çемçе-е!—тесе вăрçĕ. Çук, çук, Мирун апла калас çук, вăл мана йуратать. Выљăх-чĕрлĕхĕ тĕп пултăрччĕ-ха. Хĕрлисем часрах килчĕрех, хăй киле таврăнтăрччĕ. Вара выљăх-чĕрлĕхне те туйанăттăмăр. Çак пуппа пуйансем те лăпланĕччĕç,—тесе пуçне çĕмĕрет Марйе. Марйе пуçне çĕмĕрмесĕр ăçта кайтăр... Вăл вĕт Мирунпа пĕрле арлăарăмлă пулса пĕр ерне хуш ли çеç пурăннă пулсан та, йуратнă çынпа пурăнан пурнăçăн тутлăлăхне тутанса пăхнă. Ĕмĕрне те манас çук, çав тери вĕсем пĕрне-пĕри йурататтăчĕç. Мирунăн тăп-тăп тутисем, хура куçхаршилĕ куçĕсем йаланах Марйен куçĕсем умĕнче йăл-йăл кулса тăраççĕ. Ашшинни пек кăшт каçăртарах сăмсалă, çаврака йанахлă, сарлака çамкалă ывăл çуралнă Марйен. Вăл Ваљук йатлă, тăхăр уйăхл çитнĕ ĕнтĕ, упаленет. Ашшĕ пекех чĕрĕ. Пӳртре çитмен çĕр хăвармасть: шăпăр шăтăкне çитсе чавалать, мĕлке шăтăкне пырса тустарать тата тахта та çитет кун каçа... Хăй пĕрмайах:

— Ат-ат-ат-ат, ан-ан-ан-ан!—пĕчĕк чĕлхине пăтратса пакăлтатать. Çапла вăл пĕчĕк ача: унăн хăйĕн чĕлхи, хăйĕн йăпанчăкĕ.

Марйе, ывăлне ытараймасăр, тыта-тыта тутисене, çамкине, сăмсине, куçĕсене, ури тупанĕсене чуптăвать. Амă-

шĕ çав вăл, хăй ачи хăйĕнчен хаклă та, илемлĕ те, тутлă та. Хаҫ те çав ачи пур, унпа йăпанать.

Хуйхă вăл, кашкăр пек, кĕтмен çĕртенех сиксе тухать те пуçлать çынна тулама. Çын вара пуранна çĕртех типсе хăрса кайать. Марийен те тепĕр хуйхи хăй кĕтмен çĕртенех сиксе тухрĕ. Пĕрре вăл çапла урампа иртсе килет. Сасартăк чиркӳ старăсти арăмĕ хирĕç пулчĕ:

— Ачу пысăкланать-и?—тесе йĕкĕлтерех ыйтрĕ вăл.

— Пысăкланать ĕнтĕ, тăхăр уйăхра, упаленет вăл,— терĕ Марийе савăнăçлăн.

— Упаленессе упалентĕр та-ха... Вăл çурални çинчен упăшку пĕлет-и вара? —

Сасартăк Марийен пуçĕ, пысăк мăлатукпа çапнă пек, хĕссе ыратса кайрĕ. Çавăнтах: Ах, Ваҫук çурални çинчен Мирун пĕлмест вĕт... Ма хам ухмах пулнă-ши ун чух, хăйĕнчен йăвăр пулнине те вăтаннипе каламан. Хăй те ыйтман, таврăнсан... «ăçтан тупрăн ку ачана, шурă салтаксемпе çӳресе мар-и?—тесе ыйтсан, мĕн калăп-ши?—тесе шухăшларĕ Марийе. Унтан, чиркӳ старăсти арăмĕ çине çаврăнса пăхмасăр, васкаса, килнеле утрĕ.

Çавăнтан вара ĕнтĕ Марийен çамрăк чĕри хурăн хуппи пек тĕркелĕн çунать, анчах тĕтĕм тухни çеç курăнмасть.

Ах, чĕлхи хăрасшĕ ку чиркӳ старăсти арăмин. Мĕншĕн вăл асăнтарчĕ-ши?.. Виç-тăватă кун хушшинче Марийе пĕтĕмпех типсе хăрса кайрĕ, сăнĕ ӳкрĕ.

Марийе, ăшĕ çуннипе тӳсеймен йенне, хăйĕн амăшĕ патне чупса кайать. Темиçе хутчен ăна кала-кала пачĕ ĕнтĕ:

— Анне, Ваҫук çурални çинчен Мирун пĕлмест вĕт. Епĕ ăна, вăтанса, йăвăр пулни çинчен каламан. Ухмах пулнă. Хăй те ыйтман. Мĕн тăвас? Ăçта хурас ку Ваҫука? Мĕншĕн çуралчĕ-ши пĕреххут вăхăтсăр. Есĕ вата çын, вĕрент мĕн тăвассине, ăçта хурассине...

Амăшĕ те аптраса çитрĕ, ним калама пĕлмест. Аптранипе вăл икĕ пĕççине шарт çапать те:

— Епĕ мĕн тăвам ĕнтĕ, ачам, хăна çапла тарăхса пурăнма турă çырнă пуҫ. Ачана йышăнмасан, мĕн тă-

Мирун, пӳрт ӑшнеле кӗрсе, ачана аллипе ҫӗклесе илчӗ те йӗри-тавра пӑхрӗ. Ача, Мирун кусӗнчен шӑтарас пек пӑхса:—Ат-те, ат-те, тесе чӗлхине пӑтратса илчӗ.

Сасартӑк Мирун асне килчӗ: ӑна У-ск йалӗнчи Настук пултӑрӗ Марйе ывӑл ҫуратни ҫинчен каласа панӑччӗ. Ачан сӑнӗ те хӑйӗн несӗлне туртаҭ. Ҫавӑнпа, амӑшӗ ҫук пулсан та, хӑйӗн ывӑлӗ пуљ тесе шутларӗ:

— Ак, ку—ман ывӑл. Паллашӑр,—терӗ Мирун, ачана икӗ хулӗнчен тытса, йулташӗсем йеннеле пӑхтарса.

— Ывӑлу та ху пекех патвар, пар-ха еп те тытса йуратам,—терӗ Ахмет, ачана Мирун аллинчен илсе.

— Амӑшӗ кӗпе ҫума хатӗрленет пулас... Лаххан тулийех шыв ӑшӑтнӑ. Йепле хӑрамасҭ ку Марйе ачана пӗччен пӑрахса хӑварма? Пиҫсе кайма та пултараҭ вӗт,—хӑй тӗллӗн калаҫса илчӗ Мирун. Унтан лаххана шӑпӑр шӑтӑкне кайса лартрӗ.

Ахмет ачана, тӗрлӗ май ҫавӑркаласа пӑхаҭ, саваҭ.

— Пӑхӑр-ха, пурӗш пек патвар, тӑп-тӑп. Ӳссен ашшӗ пекех вирлӗ комунис пулӗ, буржуйсене шеллемӗ. У-ух, аллисем йепле, мӑлатук пек!

— Ха-ха-ха! Мӗнле вӑрлӑх акнӑ, ҫав ӳсет,—лӑх-лӑх кулаҭ Ентри те савӑнӑҫлӑн...

— Партизансем!

— Мирун!

— Мирун таврӑннӑ!—кӑшкӑрашса каллӗ-маллӗ чупкалаҫҫӗ урамра ҫынсем, пуринчен ытла ача-пӑчасем. Мируна вӗсем чавкасем пек сырӑнса илчӗҫ...

## IV.

Ҫав вӑхӑтра Марйе амӑшӗ патне кайнӑ пулнӑ. Мирун таврӑннине пӗлсен вӑл, ларнӑ ҫӗртех хытса кайрӗ. Ури ҫине тӑма та вӑйӗ ҫук.

— Мӗн туса ларатӑн тата? Кай хӑвӑртрах килне, ачам. Кӗрӳ таврӑннӑ, ҫилленӗ тата,—хӑвалаҭ амӑшӗ Марйене.

Марйе ури ҫине аран-аран тӑчӗ:

— Ах, анне, ес кай малтан, ес кай. Еп кайма хӑратӑп. Унта лаххан... Вӗри шыв... Ванђук...

— Аллисемпе питне хупласа, пуҫне ҫӗреле чиксе пӗчӗк ача пек ӗсӗклесе йӗрсе йачӗ.

Амӑшӗ васкаса, сӑхманӑн ҫаннисене аллисене тӑхӑнмасӑрах хулпуҫҫи ҫине ҫакрӗ те, тухса чупрӗ. Вӑл ҫитнӗ ҫӗре партизансем салтӑннӑ. Ачана пӗрре пӗри, пӗрре тепри тыта-тыта йуратаҫҫӗ.

Ачи пӗрех:—Ат-те, ат-те, ат-те, ат-те!—хӑй чӗлхипе пакӑлтатать.

— Итлӗр-ха, итлӗр—атте тесе чӗнет вӗт ку! Мӗн йатлӑ ывӑлу? ыйтать Ахмет Мирунран.

Мирун пултӑрӗнчен ывӑлӗн йатне те ыйтма астуман. Тата ун чухне ыйтса тӑма та вӑхӑчӗ пулман.

— Мансӑр пуҫне ҫуралнӑ вӑл. Йатне пӗлместӗп.

Амӑшӗ килсен калӗ-ха,—тет Мирун.

Ахмет Мирун ҫине тӗлӗнсе пӑхать:

— Мӗнле сансӑр?

— Мӗнле? Ҫапла. Мана персе вӗлерес умӗн пӗр ерне малтан ҫеҫ епӗ авланнӑччӗ. Марйе манран йӑвӑр ҫын пулса йулнӑ. Епӗ партизанта ҫӳренӗ вӑхӑтра вӑл ывӑл ҫуратнӑ. Ак, мӗнле.

— Е-е-е, епӗ вӗт апла мар, урӑхла ҫуралнӑ тесе шухӑшланӑ,—килӗшрӗ Ахмет.

Ҫав вӑхӑтра Марйе амӑшӗ хашкаса чупса пырса кӗчӗ.

— Ваҥук йатлӑ вӑл кӗрӳ Ваҥук,—ҫиҥҫе сассине йантратрӗ карчӑк.

Мирун, ури ҫине тӑрса хунемӗшне ыталаса чуптурӗ.

Марйе ӑҫта кайнӑ? Ма вӑл ачине пӗччен ҫине пӑрахса хӑварнӑ. Урай варринче лаххан тулли вӗри шыв ларать. Хаљ те хамӑр ҫитсе ӗлкӗртӗмӗр. Унсӑр тен пиҫнӗ те пулӗччӗ.

— Вӑл кӗпе ҫума шыв ӑшӑтнӑ пулљ. Пирӗн пата вӑлашка илме пынӑччӗ те... Атӑр хамӑр пата, унта ман йашка та пиҫнӗ, чей те ӗлкӗрнӗ. Хырӑмӑрсам выҫнӑ пулљ,—терӗ карчӑк йӑпӑлтатса, кӗрӳшӗн кӑмӑлне тупасшӑн.

Партизансем, ҫавӑнтах тумланса, хунемӗшӗ патне тухса утрӗҫ.

Карчӑк ачана чӗркесе йатрӗ те, партизансенчен малтан тухса лӑпӑстатрӗ килнеле.

Партизансем урам тăрăх утаççĕ, вĕсемпе пĕрле халăх туй пек кĕрлесе пыраҫ. Унта ватти-вĕтти, хĕрĕ-хĕрарăмĕ, ачи-пăчи. Мирун асне илчĕ: ик çул ĕлĕк ăна, тата унăн йулташĕсене çак халăхах масар çине ăсатнăччĕ. Анчах ун чухне вĕсем хаҧхи пек савăнăçлă марччĕ, пуçĕсене чиксе, куççуҧ йухтарса утаччĕç. Халĕ? Халĕ савăнăçлă, кулкаласа çеç пыраççĕ. Çĕлĕксене хывса, пуçĕсене тайаççĕ:

— Аван çӳресе таврăнтăн-и? Мирун шăллăм?

— Хĕрлисем час çитеççĕ-и? Мирун пичче!—кăшкăраççĕ. Ачи-пăчисем чĕрне вĕççĕн, çерçисем пек, транк-транк сикеççĕ. Пĕтĕм йалшăн савăнăç çитнĕ. Анчах Мăкăҧ Хĕветĕрĕ тавраш ĕсемшĕн, пупшăн—хуйхă. Вĕсем Мирун киле таврăннине пĕлсен çурчĕсенчен тухма хăраса, мăйкăча лекнĕ мулкачăсем пек, чĕтресе лараççĕ.

Партизансем çитнĕ çĕре карчăкăн сĕтел çиййĕ хатĕр. Сăмаварĕ чашласа вĕрет, вĕри йашкинчен пăс тухаҫ.

Пурнăç вăл улшăнулă, улталлă. Çавăнпа хăш чух йĕртет, тепĕр чух савăнтараҫ, хăш чух тата ахăлтаттарса култараҫ. Ак, пăхăр Марйе çине, вăл хаҧ çеç хуйхăлăн татăлса йĕретчĕ. Пилĕк минут хушшинче унăн хуйхисем пĕтрĕç. Халĕ ĕнтĕ вăл савăнăçпа йĕрет. Çавăнтах унăн тутисем, йăл кулса, савнине кĕтеççĕ.

Мирун алăкран пырса кĕрсенех Марйе чăтса лараймарĕ, аллинчи ачине лартрĕ те, Мирунăн мăйĕнчен ыталаса илчĕ.

— Чунăм, тавăрăнтăн-им? Каçар мана, епĕ Ваҧукпа йăвăр пулни çинчен сана калама вăтаннă...

— Ан йĕр, Марйе, ан йĕр... Халĕ ĕнтĕ йĕмеле мар, савăнмала, ахăлтатса кулмала.

Мирун, хытă чăмăртаса, чуптурĕ Марйене.

Çанталăк ăшă. Хĕвел хĕрелсе тухнă та тӳпенеле кармашаҫ. Йалта савăнăçлă, пур йенчен те пĕр чарăнмасăр сасăсем илтĕнеççĕ:

— Партизансем!

— Мирун!

— Хĕрлисем!

## *УЛТТĂМĔШ СЫПĂК.*

### I.

Йехрем пупа тем пулчĕ. Хаљ çеç çитернĕ ăйăр пек тапăлтатса çӳрекенскер, труках картлă кĕвенте пек хут-ланса кĕчĕ; ни выртса, ни ларса, ни уткаласа çӳресе канлĕх тупаймасть. Пуп пĕтĕмпех чирлесе ӳкрĕ: черкке пек чакăр куçĕсем сăра хуранĕ пек путса анчĕç; вăрăм та хĕрлĕ, çăра çӳçĕ ырхан лаша çилли пек кĕçеленсе пĕтрĕ; кĕреçе пек сарлака сухалĕ качака сухалĕ пек шӳрекеленсе йулчĕ; тĕсĕ тĕксĕмленчĕ, курпунĕ, тĕве йĕнерĕ пек, сиксе тухрĕ.

Мĕн пулчĕ? Ăна Йехрем пуп хăй çеç пĕлет. Ухмаха йернĕ çын пек, пуçне чиксе, таран шухăша путса, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳресен-çӳресен, ывăннă лаша пек: хаш! хуйхăрать тарăхса çитнипе вăл.

Пуп арăмĕ, Хавронйе, упăшки салхуланса çитнипе ним тума пĕлмест. Аптранă йенне:

— Йехрем, чунăм, мĕн пулчĕ сана? Ывăнтăн пуљ. Выртса кан кăшт,—тесе йăпăлтатса, упăшкин кăмăлне тупасшăн тăрăшать.

— Ăнтан ан йар. Ним те пĕлместĕн есĕ. Чирлерĕм епĕ...—урнă йытă пек хар кăшкăрса тăкать Йехрем арăм-не çиллипе.

— Чирлерĕн пулсан хулана тухтăр патне кайса пăх. Имçам ĕçсен çăмăл пулмĕ-и?—ачашлать арăмĕ.

— Чарăн тенĕ сана! Мăнтăр сысна. Халĕ ман чире тухтăрсем тӳрлетес çук ĕнтĕ.

Хавронйе ним тума пĕлмест. Аптăранипе чӳрече умне пырса тăрать те, тахçанччен тарăн шухăша кайса, куç хупаххисене хускатмасăр, урамала пăхса, ăнтан кайса тăрать. Унтан урăх пӳлĕмеле тухса кайать. Иккĕмĕш каç ĕнтĕ вăл вырăн çине выртса, куç хупса пăхман. Çĕрĕн-кунĕн Йехрем пуппа арăмĕ пĕрне-пĕри ăнланса пилеш-месĕр, ултă пӳлĕмлĕ, урайĕсене сарă сăрпа, тăррине тимĕр витсе, симĕс сăрпа сăрланă, халăх вăйĕпе лартнă çурт ăшĕнче канлĕх тупаймаççĕ. Пӳлĕмрен-пӳлĕме кĕре-кĕре тухаççĕ; пĕр-пĕрин çине чалăшăн-чалăшăн пăхаç-çĕ. Хуйхă, пысăк хуйхă.

Ёлĕк çавтери канлĕччĕ ку çуртра. Халĕ пĕтĕмпех кичемленсе çитрĕ.

Çав каç, çурçĕр иртсен, Хавронйе çемçе диван çине пырса ларчĕ. Икĕ каç выртса канманскерĕн ларнă çĕртех куç хупаххисем пĕр çĕре çĕленсе ларчĕç те майра çывăрса кайрĕ.

Йехрем пуп чÿрече умне пырса тăчĕ. Тулта—уйар. Лăпкă. Чÿрече умĕнчи йăмра тураттисем хумханаççĕ. Тÿпери çăлтăрсем пĕр-пĕринпе пытанмала выљаççĕ. Çăлтăрсенчен айаларах, вĕренпе çакса хунă пек, тулли уйăх хĕллехи каçа çутатать. Уйăх çути айĕнче, лăпкă çывăракан урам урлă, ылттăн хĕреслĕ чиркÿ курăнать. Чиркĕве курсан Йехрем пупăн ахаљ те ыратакан чĕри, пушшех ыратса, йĕппе чикнĕ пек пулса илчĕ; кăкарĕ хĕссе, пыр тĕпне çăра сурчăк пырса капланса, сывлăшĕ тухми пулчĕ; иккĕмĕш каç куç хупмасăр çĕр ирттернипе ирĕксĕрех пуп анасласа илчĕ те:

— Ашшийĕн, ывăлийĕн, çветуй сывлăшийĕн йачĕпе, аминљ,—тесе карăннă çăварĕ çине хĕрес хыврĕ. Йехрем пупăн чĕри çав ылттăн тăрăлă чиркÿшĕн ыратать. Вăл чиркÿ унăн пуйанлăхĕпе ырлăхĕ: вуникĕ çул вăл çав чиркÿпе ыр курса, ним хуйхăсăр, тăранса, тумланса пурăннă: мĕн ĕçсе çийес тенĕ,—ун сĕтелли çинче ларнă, мĕн тăхăнас тенĕ—ун хулпуççийĕ çине çакăннă. Акă, халĕ ĕнтĕ çав ырлăха Йехремĕн тăшманĕсем туртса илесшĕн вăйпа. Йехремĕн парас килмест. Çавăнпа вăл çĕр çывăрмасăр шухăшлать. Икĕ тавлăк хушшинче тĕсĕ пĕтсе, пичĕ çине çĕр сăнĕ çапрĕ. Пуп, чылайччен чиркÿ çинчен куçне илмесĕр, пăхса тăрсан-тăрсан, ÿсĕр çын пек тайкаланса, ларнă çĕртех çывăракан арăмĕ çумне пырса ларчĕ те:

— Ним хуйху та çук... Йÿçекен сăра пичĕки пекех харăлтатса çывăратăн,—тесе, Хавронйене айаккинчен чышрĕ.

Хаврони, ăйăх тĕлĕшпе, куçне йалт уçса пăрахрĕ.

— Мĕн пулчĕ, чунăм, мĕн?—терĕ вăл упăшкин аллисенчен йарса тытса, ачашланса.

— Мĕн пулчĕ? Илтмен-им, Мирун партизан таврăннă, тет?

— Илтме çеç мар, таврӑннине хам куçӑмпа хам куртӑм. Виççӗн килчӗç вӗсем йала.

— Ирхине пуху пулмала. Çав пухура пирӗн çак çурта туртса илсе, халӑх çурчӗ тумала. Чиркӗве хупса — клуб тумала теççӗ. Пӗлетӗн-и?..

— Ах туру! Пире ӑçта йарӗç-ши апла?

— Пире? Ех, хаљ çеç пӗтӗм йал ман майлӑччӗ. Пайан пурте Мирун йенне çаврӑнса ӳкнӗ... Çавӑнпа тӳсме çук чӗрем ыратать. Çисе апат анмасть. Выртса ӑйӑх килмест...

Матӑшкӑ, упӑшкине йӑпатса, унӑн шывланнӑ куçӗсене пуçӗнчи пурçӑн тутӑрӗн вӗçӗпе шӑлса типӗтрӗ.

Акӑ, Йехрем пуп асне илчӗ. Икӗ çул ӗлӗкрех пулнӑччӗ вӑл ӗç. Мируна тата унӑн йулташӗсене масар çине персе вӗлерме илсе кайаççӗ. Йехрем ун чухне вӗсене хӗрес чуптутарса, çылӑхӗсене каçарттарасшӑн пулчӗ. Ыттисем ун хӗресне чуптурӗç, анчах Мирун чуптумарӗ. Кай кунтан. Епӗ сирӗн çук туррӑршӑн хӗрес чуптуса вилместӗп. Револђуцишӗн. Револђуци сыв пултӑр, — тесе кӑкӑрӗнчен чышса йачӗ. Пуп кутӑн-кутӑн чакса кайрӗ, ӳкнӗ çӗртен ӑна пӗр дружинник тытса ӗлкӗрчӗ. Халӗ ӗнтӗ Мирун çавӑншӑн Йехрем пупа каçарас çук... Çук. Ӗмӗрне те каçарас çук...

— Вӑл вунсаккӑрмӗш çулта пулнӑччӗ. Халӗ ӗнтӗ — çирӗмӗш, — терӗ Йехрем, шанчӑксӑр сассипе хаш сывласа.

Ирхине, кӑвакçутӑ çутӑлса сарӑлнӑ-сарӑлманах, урам тӑрӑх пӗр йуланутлӑ çын, чӳречерен-чӳречене шаккаса, — пухӑва чӗнсе çаврӑнчӗ.

— Ӑçта? Кам патне? — тесе ыйтаççӗ çынсем.

— Пуп çуртне! — кӑшкӑрать пуху хӑвалакан.

Йехрем пуп, çак сасса илтсен чӳрече патне васкаса пырса, урамала пӑхрӗ. Курать: Мирун тата унпа пӗрле тӑват-пилӗк хресчен урам кукӑрӗнчен тухрӑç те тӳрех кунтала калаçкаласа утаççӗ. Мирун партизанлӑхне пӑрахман: кӑкӑрӗ урлӑ пулемет ленти, хулпуççийӗ çине пӑшал çакнӑ, çӗлӗкӗ çумӗнче хӗрлӗ лентӑ вӗлкӗшсе пырать.

Мируна курсан, Йехрим пуп урӑх шухӑшласа тӑмарӗ. Унӑн йепле те пулсан Мирун куçӗ умне пулас килмест.

Çавăнпа, васкаса, арăмĕн кивĕрех паҫтоне тăхăнчĕ те, пуçĕ çине шаҫ пĕркенсе, урайĕнчен маччана перĕнсе тăракан куçкĕски витĕр пырса пăхрĕ. Питне курмасан— никам та паллайас çук; хыçĕнчен пăхсан—каснă-лартнă Тўлен арăмĕ пекех: сарлака купарчалă, кăшт курпунлă, кĕлешче уралă... Унтан пĕр пысăк мар арча уçса, кăсйисене темĕскер ывăçла-ывăçла тултарчĕ те, пўрт алăкне лач хупса, тулала тухса кайрĕ.

Мирунпа хресченсем, шакăлтатса калаçса, пуп хапхи умне çитсе, шăп хапхаран кĕнĕ çĕрте пĕр шаҫ пĕркеннĕ хĕрарăма хирĕç пулчĕç. Хĕрарăм, вĕсем çине пăхмасăр, пуçне çĕреле чиксе, йăпăр-йапăр иртсе кайрĕ.

— Кам арăмĕ пулчĕ ку?—терĕ пĕр хресчен, хĕрарăм çине пăхса.

— Кам пултăр? Курмастăн-им? Тўлен арăмĕ вĕт,—терĕ тепри.

— Мĕн мурĕ шыраса çўрет ирех?

— Ха-ха-ха! Пуппа пит тўрĕ пурăнаççĕ вĕт вĕсем иккĕшĕ... Пупа кăмăл тума килнĕ пуҫ...

Çапла шакăлтатса калаçса, кулкаласа, пуп çуртнеле кĕрсе кайрĕç Мирунпа хресченсем. Шаҫ пĕркеннĕ хĕрарăм йалтан тухса, хула çулĕпе, хыçалала çаврăна-çаврăна пăхса васкаса утрĕ.

II.

Тул çутăлчĕ. Пуп çуртне халăх пуçтарăнат. Пыни пĕрисем малтанах алăкран кĕреççĕ те, тĕпелеле иртме хăйаймасăр, алăк умĕнче тăп чарăнса, унтала-кунтала пăхкаласа тĕлĕнсе тăраççĕ.

— Мĕн вăтанса тăратăр? Иртĕр тĕпелеле, хăнана килмен вĕт есĕр кунта, пĕрне-пĕри сĕнеççĕ хресченсем. Савăнăç. Шавлаççĕ, кулаççĕ, ахăлтатаççĕ пурте...

— Ах, шуйтан вăрăм чилхе. Халăх ĕнси çинче йеплелайăх пурăннă вăл. Пăхăр-ха, пăхăр. Мĕн кăна çук унăн çуртĕнче. Райри пек вĕт...

— Çак йапаласем пурте пирĕн хресчен вăйĕпе пулнă вĕт.

— Кам вăйĕпе тетĕн тата?

— Халĕ ĕнтĕ пирĕн ку йапаласене кама мĕн тивет, шăпа йарса уйăрса илмеле.

— Тĕрĕс, уйăрас!—виççĕн-тăваттăн харăс кăшкăрса йачĕç.

— Çук, апла йурамасť, йулташсем. Уйăрмасан та ку йапаласем пурте пирĕн пулчĕçĕ. Ку çуртра йалсовечĕ ĕçлĕ. Вăхăт çитсен чиркӳрен клуб тăвăпăр; унта хулари пек çпектакăљсем лартăпăр,—ăнлантарса пачĕ Мирун хресченсене.

— Тĕрĕс. Ак ку грамофонне клуба лартăпăр; çамрăксене ура хуçса ташлама пит лайăх пулаť,—тенĕ сасă илтĕнчĕ.

— Ей, кам грамофон выђатма пĕлет? Ретлесе йарăрха Совет влаçĕ тепĕр хут пулнă йĕркепе ташлас килет ман пайан.

— Чăнах ташлатăн-и?

— Чăнах пулмасăр, суйса калаççĕ-им сана. Йара пар.

Урай варринче ларакан, симĕс клейонкă витнĕ сĕтел çине грамофона йăтса пырса лартрĕç. Салтак шинелĕ тăхăннă, качака сухаллă хресчен авăринчен çавăрса хускатса йачĕ. Грамофон малтан майĕпен, селĕп вырăс пек чашласа, хускалса кайрĕ, унтан хытăран хытă:

> Эх, ехал из ярмарки ухарь-купец
> Ухарь-купец, удалой молодец
> Заехал в деревню лошадей покормить
> Вздумал деревню гульбой удивить.

— Ну, мĕн хытса тăратăн тата? Аťа, пуçла. Йара пар!

Карппа кăвакара пуçланă качака сухалне аллипе шăлкаласа тӳрлеткелерĕ; унтан, пуçĕнчи мĕскĕн çĕлĕкне хывса, урайне çĕклесе çапрĕ те, курпунне кăларса, хулпуççийĕсене сиктерсе, урисене кĕлешчелентерме тытăнчĕ.

Пуп çурчĕ çуркуннехи кăткă йăви пек кĕрлет.

— Йулташсем. Пурте пуçтарăнса пĕтрĕç пулмала. Аťăр, пуху уçар,—терĕ Мирун пурте илтĕнмеле, аллисемпе сĕтел çине тайăнса.

Мирун сассине илтсе, вĕлле хурчĕ уйăрнă вăхăтра кĕрленĕ пек кĕрлекен халăх труках шăп пулчĕ. Карппа ташлама чарăнчĕ. Грамофон та хăйĕн йуррине пĕтерчĕ.

Малтанхи пуху пуçланчĕ. Мирун вăрăм мар сăмах каларĕ. Сăмахне вăл çапла пĕтерчĕ:

— Большевиксен партийĕ тĕрĕс çулпа йертсе пынипе, рабочисемпе ĕçхресченĕсем пĕрлешсе Çĕпĕрте патша пулса ларасшăн тăрăшакан йунлă—Колчака çĕнтерчĕç, каллех Çĕпĕрте те совет влаçĕ пулса тăчĕ. Малашне ĕнтĕ епĕр икĕ вăрçă вăхăтĕнче йухăнса пĕтнĕ хамăр хуçалăхсене тӳрлетме пуçлăпăр. Анчах çакна манас пулмасть: клас тăшманне çĕнтернĕ пулсан та, малта кĕрешӳ пĕтмен-ха. Çав вилĕмлĕ суранланнă, анчах вилсе çитеймен тăшман хуть те хăçан та çĕнĕрен пуçне çĕклесе пăхма пултарать. Пирĕн ăна хатĕр тăрас пулать. Çав кĕрешĕве йертсе пыма, тата пролетари диктатурине сыхласа тăма пайан епĕр йалсовечĕ суйлăпăр... Совет влаçĕ рабочисемпе батраксен, чухăн тата вăтам хресченсен—влаçĕ. Çавăнпа та унта çав рабочисем, батраксем, чухăн тата вăтам хресченсем çеç пулма пултараççĕ...

— Совет влаçĕ—ĕçлекенсемпе батраксен, чухăн тата вăтам хресченсен влаçĕ тетĕн. Пирĕншĕн влаç ăçта вара? Епĕр те вĕт çак çĕршыв çинче пурăнмала—Мируна пӳлсе кăшкăрчĕ те сивĕпе, те ерех-сăра нумай ĕçнипе тытăннă харăлтатакан пĕр сасă.

Мирун калама чарăнса, чĕрне вĕççĕн тăрса, алăк патнеле кармашса пăхрĕ.

— Камсемшĕн вăл, сирĕншĕн?

Пуйантарах хресченсемшĕн,—каллех çав сасă илтĕнчĕ хăраххăн.

Мирун тата кармашарах, алăк патне тинкерсе пăхрĕ. Унта Мăкăҥ Хĕветĕрин шăллĕ—Йакур тăрать. Йакурăн чĕкĕнтĕр пек хĕрлĕ, кĕсел пек лĕмпĕртетсе тăракан икĕ питçăмартийĕсем хушшинчи лапчăк сăмсин икĕ йенче шăши куçĕсем йăлтăртатса Мирун çине çиленсе пăхаççĕ.

— Сирĕншĕн влаç Байкал леш йенче!—шăлĕ витĕр сăмахĕсене сăрхăнтарса кăларчĕ Мирун.

Йакур урăх чĕнмерĕ. Мирун куçĕ умĕнчен çухаласшăн пулса, çынсен хыçне кĕрсе, хутланарах тăчĕ.

Пухури çынсем Йакур çине шурă куçĕсемпе çавăрна-çавăрна пăхрĕç.

— Ы-ы-ых! тăшман... Каллех влаçшăн çунса тăраť,— пĕр сасă шăл витĕр илтĕнчĕ.

— Ха-ха-ха! Влаçшăн!.. Парас ăна «влаç».

— Ав, ăçта сан йулташсем? Байкал леш йенче!

Тĕрлĕ сасăсем ахăлтатса кулса йачĕç.

Йакур намăса тӳссе тăраймарĕ, пуçĕнчи тилĕ çĕлĕкне куçĕ çинерех пусса лартрĕ те, пухуран тухса кайрĕ. Çав кунтан вара Йакуршăн хăй çуралса ӳснĕ тăван йалĕ йутăн курăна пуçларĕ. Чухăнсене вăл ĕлĕк те курайман; халĕ ĕнтĕ пушшех курайми пулчĕ. Çĕлен пекех курăнаççĕ вĕсем унăн куçне. Май пулсан, йала пĕтĕмпех çунтарса йарса, çыннисене, чĕчĕ ачинчен пуçласа, кăмака çинче ларакан шăлсăр карчăксемпе стариксене çиҭитчен вĕлерсе тухасси килсе çитрĕ. Анчах май çук. Мĕнле? Мĕншĕн-ха вăл ку шухăша—Хветĕр пичĕшĕ пур чухнех шухăшламан-ши? Халĕ ĕнтĕ кăшт кайарах пулчĕ.

—Ак, куртăр-и йулташсем!—çĕнĕрен калама пуçларĕ Мирун.—Илтрĕр-и?

Тăшман каллех влаçа хăй аллине йарса тытасшăн кармашаť. Çук! Малашне ĕнтĕ влаç тăшман аллине лекес çук. Епĕр ăна вăрçăра йун тăкса илнĕ. Совет влаçĕ пирĕн тăван влаç. Епĕр ăна вилсен те, никама та парас çук.

— Тĕрĕс!

— Пирĕн влаç!

— Никама та памастпăр!

— Пĕтчĕр пуйансем!

Сăпса йĕвине хулăпа пăтратнă пек сĕрлесе, пăтрана пуçларĕ пуху халăхĕ.

Мирун, тинĕс пек хумханакан халăх çине пăхса çăвăрăнчĕ те:

— Йулташсем! Кам çак çĕнĕрен çуралакан совет влаçне тăшман аллине парас мар, тет, çавсем пурте пирĕн большевиксен партине пулăшса, аллисене хĕçпăшал тытса, влаçа сыхлама тăмала.

Мируна каласа пĕтерме те памарĕç:

— Мана çыр.

— Мана та.

— Епĕ те çырăнатăп.

Тĕрлĕ сасăсем—тĕрлĕ йенчен кăшкăра пуçларĕç.

Çапла Мирун ĕçхресченĕсем болшевиксен партишĕн çирĕп тăнине тепĕр хут виçсе пăхрĕ.

Çав пухура çĕнĕрен йалсовечĕ суйларĕç. Совет председателе Мируна хучĕç.

Пуп çурчĕн крыльца çумне шултăра саспаллисемпе çырса: «Ку çуртра М-ский йалсовечĕ» тесе таçтан кăшкăрса тăракан вывĕскă çапрĕç.

Çурт тăрринче хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет. Вăл хĕвел çинче вутăн-хĕмĕн курăнат.

---

Перевірено 1948 г.

БІБЛІОТЕКА

Хакĕ 1 т. 20 пус
Цена 1 р. 20 коп.

12 коп.

101274

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# ПАРТИЗАНЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ ▪ 1935